87| 30-131
КНИГОХРАН... ...ЩЕ

# ЛИТТЕРАТТУРĂ КРАМĂТТИ НИКĔСĔСЕМ

ЙАЛКОРСЕМПЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ

ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

...ШКАР

...3 0

Хакĕ 75 пус

8
...-64

КНИГОХРАНИЛИЩЕ

8
Л-64

# ЛИТТЕРАТТУРĂ КРАМĂТТИ НИКĔСĔСЕМ

## ЙАЛКОРСЕМПЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ВАЂЛЂИ

Ку кĕнекене Исоттăвăн, Шенкелин т. ыт кĕнекесенђен пухса, ђăвашла примерсем илсе Ç. ЙАЛАВИН çырнă

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

1520 бр.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1930

# Паллă писсаттĕл мĕн калаť.

Кăпиталиссемпе улпутсем пурнăçра литтераттурă пысăк вырăн йышăнса тăнине пит аван пĕлсе тăнă. Литтераттурă йе вĕсене ĕçлекен халăха хăйсен аллинђе тытса тăма, ĕçлекенсемпе хресђенсен тарĕпе «ырлăх курма» пулăшнине, йе вăл ĕçе кансĕрленине—аван ăнланса тăнă. Çавăнпа пуршуаçи хăйсен майлă литтераттурă тăвасшăн, вĕсене итлекен, пулăшакан писсаттĕлсем хатĕрлесшĕн тем пек тăрăшнă.

Ĕçлекенсемпе хресђенсем, паллах ĕнтĕ, хăйсен пурнăçне çутатса паракан, пурнăçа, йĕркене, кĕрешĕве илемлетекен хăйсен литтераттурине тăваççĕ.

Пуршуаçи писсаттĕлĕсем çырма ăçта вĕреннĕ? Кăпиталиссемпе помешђĕксем хăйсен ађисене йепле те пулсан вĕрентме тăрăшнă, мĕншĕн тесен пĕлнинђе, вĕреннинђе—вăй.

Шкулсенђе, кимнаçисенђе улпут ађисене ытти ăслăлăхсемпе пĕрле тата литтераттурăпала, литтераттурăллă происветенисене çырас йĕркесемпеле те паллаштарнă. Çапла вара шкултан вĕренсе тухсан пурте литтераттурăллă происветенисене йепле çырассине аван пĕлнĕ.

Ĕçђен хресђенсемпе ĕçлекенсем кимнаçинђе, универçиттетсенђе вĕренеймен. Вĕсем пурнăçра, ĕçленĕ вăхăтра, суха туса, станок умĕнђе тăрса ĕçлесе анђах вĕреннĕ.

Йепле йывăр пулсан та, çакна манас пулмасť: пурнăçра вĕренни урăх тĕрлĕ, калама çук илемлĕ, хитре литтераттурă шăратса кăларať, мĕншĕн тесен вăл (пирĕн литтераттурă) ĕçлекен класăн ђăн пурнăçĕпе, унăн пурнăçа илемлетекен кирлĕ ĕçĕпе уйрăлми çыхăнса тăрať.

Çак йăвăрлăхсенђен йалкорсен пĕртте хăрас пулмасť, хăйсен кирлĕ таран вĕренес пулať.

Ĕçлекенсемпе хресђенсене те çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре, хăйсен кĕрешĕвĕнђе шутсăр нумай писсаттĕлсем кирлĕ, вĕсем пуласси паллах, мĕншĕн тесен ĕçлекен халăх хушшинђен куллен кун шутсăр нумай çĕнĕ йалкорсем, ĕçкорсем тухса, палăрса пыраççĕ.

**А. Çерафимовиђ.**

# ЛИТТЕРАТТУРĂ МĔН ВĂЛ?

Ҫын опшĕствăра пурăнаҭ. Ун йĕри тавра—ҫемйе, тăванĕсем, пĕрле ĕҫлекен йулташĕсем т. ыт. те. Кашни ҫыннăн хăйне ҫывăхри ҫынсемпе пĕрмайах калаҫмалла, ытти ҫыннăн шухăшне ыйтса пĕлме тӳрĕ килет, ху шухăшусене каласа памалла пулаҭ. Унсăрăн пуҫне опшĕствăра пурăнма та май килмест, мĕншĕн тесен ҫынсем пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене, хăйсен вĕреннисене, тата кирлĕ йапаласем шухăшласа кăларнисене каласа кăтартмасан, пĕр сăмахра пулса пĕрле ĕҫлесси те, аван пурнăҫшăн пĕрлешсе кĕрешесси те пулман пулĕҕҕĕ, выҙăхсем пек ҫеҫ пурăннă пулĕҕҕĕҫ ҫынсем. Ҫынсене опшĕствăра пĕр-пĕринпе ҫирĕп ҫыхăнтарса, пĕрлештерсе пурăнтаракан йапаласенҕен ҕăн пысăкки, ҕи вăйли—с ă м а х.

Хамăр куллен кунхи пурнăҫра хамăра ҫывăхри ҫынсемпе пĕрмайах калаҫатпăр; ҫырусем епĕр пит сайра ҫыратпăр, хамăр шухăшсене, аса килнисене тата та сайрарах ҫыркалатпăр. Анҕах епĕр пĕтĕм опшĕствăпа, ҫынсен ушкăнĕсемпе ҫыхăнса вĕсемпе пуринпе те калаҫас тесен ҫыру сăмахĕпе ырă куратпăр. Урăхла тума та май килмест. Ҕи пысăк миттĕнкăра та темиҫе пин ҫын ҫеҫ пулаҭ; урăхла каласан етем опшĕствин кĕҫĕн пайĕ ҫеҫ пулма пултараҭ. Ҫитменнине тата каласа панă сăмаха, ăнланайсан ăнланса йулан, ăнланаймасан ҫаплах иртсе кайаҭ, ҫĕнĕрен ыйтма май ҫук. Кĕнеке вуланă ҕухне апла мар, хăш-пĕр тĕлте ăнланаймасан ҫĕнĕрен вуласа тухса, ытларах шухăшласа ăнланма пултаратпăр. Кунтан пуҫне тата, ҕас-ҕасах калас шухăшсем ҫав тери нумай та вăрăм та пулнипе, вĕсене сăмахпа каласа пама май пулмасҭ, темиҫе хут миттĕнка тухса каласан та кирлĕ таран ăнлантарса пама ҫук, йулашкинҕен тата политтĕк тĕлĕшпе йе наукка тĕлĕшпе ĕҫлекенсем хăйсен вăхăтĕнҕе пурăнакансене ҫеҫ мар, вĕсенҕен кайран пурнакан ҫынсене те хăйсен шухăшĕсемпе паллаштарасшăн.

Сăмахран, Карл Маркс вилни 50 ç. çитет пулсан та епĕр ун шухăшĕсемпе хаҌ те ырă куратпăр. Вăл хăй шухăшĕсене хут çине çырса пурнс те пухса кĕнеке туса кăларман пулсан, епĕр вĕсемпе паллашнă пулăттăмăр-и, çук-и? Вăл сăмахпа çеç каласа вĕренгнĕ пулсан, епĕр ун сăмахне итлекенсенҌен ун шухăшĕсемпе паллашнă пулăттăмăр таи тен, анҌах вĕсене (вăл шухăшсене) никам та тĕрĕс каласа параймаҥ пулĕҌҌĕ, ун шухăшĕсене пăсса пĕтернĕ пулĕҌҌĕç. Вăл хăй шухăшĕсене кĕнеке çине çырса хăварнипе, вĕсене никам та пăсма пултараймасҭ.

Çапла вара çынсем вулаҌҌăр тесе кĕнеке çине çырнă сăмахсене л и т т е р а т т у р ă п р о и с в е т е н и теççĕ, çакăн пек происветенисен пуххине л и т т е р а т т у р ă теççĕ. Пĕрмайах литтераттурăллă происветенисем çыракан çынна, çав ĕçпе ĕçлесе пурăнакан çынна л и т т е р а т т ă р, п и с с а т т ĕ л теççĕ.

### Литтераттурă миçе тĕслĕ пулаҭ.

Хăш-та хăш писсаттĕл пурнăçра çав вăхăтрах кирлĕ йапаласем çинҌен, вĕренсе пĕлмелли çинҌен кĕнеке çыраҭ. Сăмахран: шкулта вĕренмелли кĕнекесем, справăҌниксем, мĕне те пулин кăтартса паракан кĕнекесем. Ун пек литтераттура п р и к л а т н ă й литтераттурă, урăхла каласан пурнăçра кирлĕ йапаласене кăтартса ăнлантарса паракан, вĕсем çинҌен вĕрентекен литтераттурă теççĕ. Ыттисем тата, опшĕствăллă пурнăçа, йе тĕнҌере пулакан йапаласене сăнаса, вĕсем çинҌен, хăйсем мĕн сăнаса пĕлни çинҌен кĕнекесем çыраççĕ. Ун пек литтераттура — науккă (ă с л ă л ă х) литтераттурĕ теççĕ. Вулакансене мĕне те пулин ĕç тума (кĕрешме, ĕçлеме т. ыт.) Ҍенекен литтераттура — а к и т а т с и л л ĕ литтераттурă теççĕ. Пурнăçра куллен кун пулса пыракан йапаласем çинҌен, вĕсене йе астутарса çеç йе кăтартса, ăнлантарса паракан литтераттура ш у р н а л л и т т е р а т т у р ĕ теççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çинҌен шурналсемпе хаçатсем çинҌе çыраççĕ.

Çак литтераттурă пурнăçпа пит çыхăнса тăраҭ. Сăмахран: тĕнҌере пулман йапаласем çинҌен, калăпăр: ĕмĕр пулман тискер кайăксем (тракконсем) çинҌен, йе йытă пуçлă çынсем çинҌен çырмаççех; шкулта аҌасене вĕрентекен кĕнекесем çинҌе хăйăртан йепле майпа кантăра йавасси çинҌен çырмаççех; çынсене шăрпăк коропкисене кышлама, йе хăйсен Ҍавсине çыртма Ҍĕнекен

çуках; Мускав урлă Нева шывĕ йухса иртет, йе Ленинкратра вĕçекен çуртсем тунă тесе сырма йурамастех. Çапла ĕнтĕ малта кăтартнă литтераттурăра пурнăçра пулман йапаласем çинђен, пурнăçра кирлĕ мар йапаласем çинђен сырмаççех.

Анђах кунтан пуçне урăх майлă литтераттурă пур. Вăл — хутошĕствăллă, урăхла каласан илемлĕ литтераттурă. Вăл пурнăçпа сыхăнма сыхăннă та, анђах унтан пуçне тата сыраканнипе, автăрĕпе те сыхăннă. Калăпăр: пĕр ăста вĕренмĕ сын сывлăш çинђен, йе Киттай патшалăхин йĕркине сырма тытăнсан пурнăçран ниçта та пăрăнма пултараймасť, вăл хăй мĕн курнине, мĕн сăнаса пĕлнине çеç сыраť, хутошĕствăллă проиcветенин автăрне илсен, вăл мĕн курни-илтни çинђен çеç мар, тата тĕнђересĕмĕр пулман сынсем çинђен, пулман сопыттисем çинђен, тата хăйĕн шухăшĕсем çинђен т. ыт. те сыраť. Уйăха епир пурте курнă; вĕреннĕ сынсем виçсе те пăхнă ăна, унтан картăђкă та ўкернĕ, унта мĕн пурне сăнанă, анђах уйăх çинђе никам та пулман, никам та унта мĕн пурне кайса курман пулсан та франтсус писсаттĕлĕ Шўлђ Верн «Уйăх çине кайса килни» йатлă повĕç сырнă. Вăл повĕçе вулама тытăнсан ђарăнма çук, вулама çав тери интереслă. Апла пулсан çак пуçран шухăшласа кăларса, тĕнђере пулман йапаласем, сопыттисем çинђен йуптарса сырнă литтераттурăн усси пур-ши, çук-ши? Усси пур. Ун усси çакăнтан курăнаť: Мĕнле те пулин повĕç вулама тытăнсан, ну, калăпăр, Рсайăн «Пушар» йатлă повĕçне вуланă ђухне куройсен пурнăçĕ, вĕсен мĕн шухăшлани, мĕнле ĕçсем туни пирĕн умра пулса иртнĕ пекех, вуласа тухсан повĕçре сырнă йапаласем тĕнђере, пурнăçра пулнă пекех тата ун пек сынсем пурнăçра пур, епĕр вĕсене курнă. Урăх сăмахсемпе каласан, пирĕн умра пурнăç курăнса иртет, унта ак çак уйрăм çеç пур: кунта писсаттĕл хăй пурнăçа сăнанă тăрăх сынсен паллăрах уйрăмĕсене пухса сырнă. Фоттокрăфсем акă: темиçе сын сăнне ўкереççĕ те, кайран çак ўкерђĕксене пĕрле пухса пĕр картăђкă тăваççĕ; çапла вара тĕрлĕ сынта палăрнă паллăсем пурне те пĕр çĕре пухнипе таçтан курăнса тăраť; хăш-хăш сăнра палăракан уйрăмсем аплах сисĕнмеççĕ, пĕр сыннăн çеç уйрăм паллисем пĕтĕмпех çухалаççĕ. Çапла майпа ўкернĕ сăн, пĕр май пăхсан ўкерттерекенсен кашнин сăнĕ пекех пулаť, анђах пурин уйрăмĕсене те пĕрле пухнипе пурнăçра ахаљ ђух палăрман сын сăнĕ пулса тăраť.

Хутошĕствăллă происветени те пурнăçăн «сăн-питне» кăтартса парать. Писсаттĕл хăй шухăшĕсем, хăй курса асапланнисем çинђен çырсан та епĕр ун происветенисене вуланă ђухне хамăр курнисене, хамăр шухăшсене аса илетпĕр, писсаттĕлпе пĕрле пурнăç çинђен шухăшлама пуçлатпăр. Хутошĕствăллă литтераттурă çак йеньђен усă парать.

## Мĕнле писсаттĕлсем пулаççĕ?

Ленин происветенисене илсе вуласан епĕр акă мĕн куратпăр: унта наукка тĕлĕшпе çырнисене те, акитатсиллĕ происветенисене те тата шурнал литтераттурĕне те тĕл пулатпăр; пурнăçăн тĕрлĕ вăхăђĕшĕн, тĕрлĕ ыйтусем пирки темиçе тĕрлĕ статйасем пур, анђах калавсем, повĕçсем, сăвăсем çук унта. Пушкин происветенийĕсенђе пуринђен ытла сăвăсем, пĕр ик-виç калав, пĕр наукка тĕлĕшпе çырнă статйа, тата хутра-ситре шурнал статйисем тупăнкалаççĕ. Ĕлĕкхи Коратсий йатлă писсаттĕл сăвăсем çеç çырнă, «Правтă» хаçатра ĕçлекен Кољтсов нимрен ытла статйасем, фелйеттонсем çырать. Ђăваш писсаттĕлĕсене илсен, Хусанкай ĕлĕкхи Коратсий пек сăвăсем çеç çырать. Елкер сăвă та калавсем те çырнă. Йăван Муђи (Илларионăв) пуринђен ытла кĕске, кулăшлă калавсем, фелйеттонсем çырать. Оçиппов, Ф. Павлов, Шуç Левентейĕ, Кошкински пйессăсем çыраççĕ, Арк. Солоттăв статйасем çырать, Хумма Çеменĕ калавсем çырать, Шупуççынни сăвăсем çырать т. ыт. те.

Çапла ĕнтĕ кашни писсаттĕлĕн мĕнле те пулсан спетсиаљнăçĕ (ăсталăхĕ) пулать, йе пĕр тĕрлĕ çеç пулмасан та вĕсенђен пĕри ђи паллă ырăн йышăнса тăрать.

Пуххарĕн политтĕк ĕçĕпе ĕçленĕ, çавăнпа унăн мĕн пур сођђиненийĕнђе те акитатсиллĕ, наукка тата шурнал статйисем нумай; вăл опшĕствă çинђен, пурнăçа йепле урăхлатасси çинђен, пĕр сăмахпа каласан револђутси çинђен çырнă. Ун пек писсаттĕле епир пуплитсист тетпĕр.

Елкер Шупуççынни, Ваçанкка, Шăпђăк, Уç, Митта пуринђен ытла сăвăсем çыраççĕ, Хусанкай сăвă çеç çырать, вĕсене епĕр поетсем (сăвăçсем) тетпĕр.

Хумма Çеменĕ, Рсай, Патман, Трупина Мархви, Лашман, Паймен, Йуман, В. Краснов т. ыт. те калавсем, повĕçсем çыраççĕ, вĕсене просайĕксем, йе урăхла пеллетристсем теççĕ.

Тата хăшĕ хаçат-шурналсем çинђе тĕрлĕ статйасем, фелйеттонсем, криттĕккăсем çыраççĕ, калăпăр: Куçнетсов, Милли, Титтов, Токçин, Кели, Фетăрăв, Иссайĕв, Савнă Тус, Саххарăв, т. ыт. те, вĕсене вара пуплитсиссем теççĕ.

Анђах пирĕн ђăваш условийĕнђе писсаттĕлсем тĕрлĕрен çыраççĕ, Рсай иртнĕ çулсенђе сăвăсем ытларах çырађђĕ, хаљ калавсем, повĕçсем çырать, Патман пĕр вăхăтрах калавсем те, криттĕклĕ статйасем те çырать, Солоттăв та, Хумма Çеменĕ те, Йуман та, Пинер те тата нумайĕшĕ те çавах, тĕрлĕрен çыраççĕ.

Ку кĕнеке литтераттурă вĕренес текенсене кирлĕ правилăсем кăтартса парать.

Ĕçкорсемпе йалкорсем çĕнĕ писсаттĕлсем кăларса тăракан реçервă (саппас) хисепĕнђе пулмалла.

П. С. К.(п.) парттин 13-мĕш сйесĕ ресољутсинђен.

## ПИССАТТĔЛ ПУЛАС ТЕСЕН—ХУ ЂĔЛХӲНЕ АВАНЛАТМА, ИЛЕМЛЕТМЕ ТĂРĂШАС ПУЛАТ̆.

Кашниййех лайăх стољар йе писсаттĕл пулма пултараймаст̆. Писсаттĕл, йе стољар ĕçне кашни çыннах вĕренме пултарат̆. Анђах лайăх, ăста писсаттĕл пулас тесен, стољар йе урăх ăста хăйĕн маттериалĕсемпе ĕçленĕ пекех, çыру ђĕлхине çивĕђлетсе йакатас тĕлĕшпе ĕçлес пулат̆. Çыру ђĕлхи çинђен мĕн пĕлмеллипе ăна мĕнле майпа çивĕђлетсе йакатасси çинђен пирĕн кĕнеке ăнлантарса парĕ.

Писсаттĕл ĕçĕ ытти ăста ĕçĕ майлах: ĕçђен ăста хăй ĕçĕ çинђен ĕçленĕ вăхăтра çеç мар, тата пушă вăхăтра та шухăшлат̆. Вăл ыттисене сăнат̆, хăй ђухлат̆, тĕрлĕ килĕшӳллĕ майсем шырат̆, тăвас ĕçĕн йĕркине ĕçе тытăниђђен малтан шухăшласа хурат̆ тата ытти те. Хăй ирĕкĕпе пĕрмайах сăнаса çӳрени писсаттĕле калама çук усă кӳрет. Унăн ĕçĕ пĕр çырнинђе кăна мар; ĕçе тытăниђђенех малтан нумай шухăшлас пулат̆, васкамасăр, хăйĕн пуçлас ĕçĕн пайĕсене малтан пуçра йĕркелес пулат̆. Шухăшласа хунă сођђиненине çырма тытăниђђен малта кăтартнă пек хатĕрленнинђен пуçне, çырма вĕренес текен çыннăн тата тепĕр йапалана асран çухатас пулмаст̆. Вăл акă мĕскер: есĕ ăçта та пулин ху курнă йапаласем çинђен ăнланмалла, çивĕђ сăмахсемпе каласа пама вĕрентетĕн хуна ху, урăхла каласан, ху мĕн курнине, мĕн илтнине, мĕн сиснине кĕскен, пĕр икĕ сăмахпа каласа çутатса пама вĕрентетĕн. Куна пур çĕрте те, пур вăхăтра та тума пулат̆. Сăмахран, тухрăн ес ак хире. Пĕр йенђен пысăк хура пĕлĕт хăпарса килнине куратăн. Еп пĕлĕт хăпарни çинђен çапла сăмахсемпе анђах каланă вырăнне, есĕ мĕн калăн-ши? «Хура пĕлĕтсем тинĕс хумĕсем пек йавăнаççĕ»... йе «йал хыçĕнђен хура пĕлĕтсем капан пек купаланса килеççĕ» тесен

хитререх, тӗрӗсрех пулат̆. Ҫав хура пӗлӗтсем сана мӗн тӗслӗ курӑнаҫҫӗ, сан пуҫна вӑл пӗлӗтсем мӗнле шухӑш кӗртеҫҫӗ, ҫсӗ те ҫавӑн тӑрӑх хӑвӑн илемлӗ, паллӑ, йе урӑхла каласан опрӑслӑ сӑмахна тупса кала. Хӑш вӑхӑтра, килӗшӳллӗ илемлӗрех сӑмах, тӗрӗсрех опрӑс тупас тесен ху шухӑшусене ҫӗнӗрен сӑнаса тухни пит усӑ кӳрет. Шухӑша ҫапла сӑнаса, тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн ӑна тӗрӗс, илемлӗ каласа пама вырӑнлӑ, килӗшӳллӗ сӑмах шыран. Хӑш ђух тата сисмен, шухӑшламан ҫӗртенех пит килӗшӳллӗ сӑмах тупса хуратӑн.

Ҫавӑн пек ӑнӑҫлӑ, килӗшӳллӗ, пуҫра сасартӑк сиксе тухнӑ сӑмахсене ҫыраканӑн ҫухатас пулмаст̆. Ҫавӑнпа ху ҫумӑнта йаланах, пӗрмайах пӗђӗк тетрат̆, йе ҫырмалли пӗђӗк кӗнеке пулмалла. Вӑл кӗнеке ҫине хӑвӑнне те, тата ытти ҫынсенђен илтнӗ хаклӑ сӑмахсене, килӗшӳллӗ сӑмах йӗркисене ҫырса пыма кирлӗ. Ҫав кӗнеке ҫинех тата хӑвӑн пулас ӗҫӗн тӗп шухӑшне ҫырас пулат̆; ун пек шухӑшсем пурнӑҫра ӗҫсем хушшинђе тӗрлӗ вӑхӑтра пуҫа килсе кӗреҫҫӗ, ҫырса хумасан ытти шухӑшсем хушшинђе арпашӑнса кайаҫҫӗ, йе пӗтӗмӗшпех манӑҫа тухаҫҫӗ. Ҫапла ҫырса тухнисенђен хӑшӗсем сана ҫырнӑ вӑхӑтра кирлӗ пулмасан та униӑн куђанмалла пулас ҫук. Ҫырнисенђен нимшӗн те усӑ курмасан та, тӑрӑшни харама каймаст̆; мӗншӗн тесен ҫырса йулни сӑнава нумайлатат̆, ҫыру ђӗлхипе паллаштарат̆, унпа хӑнӑхтарат̆.

Малтан кӑтартнӑ вӗреннисем те, ҫырмалли кӗнеке ҫине ҫыркаланисем те писсаттӗл пулма хатӗрленни мар-ха. Ҫук—вӗсем пӗрмайах сирӗнпе пулмалла. Литтераттурӑ вулани те ҫавӑн пекех сирӗн пӗрмайхи, куллен-кунхи ӗҫ пулмалла. Хӑй тунӑ йапаласенђен пуҫне урӑх йапаласене курман нађар стољар пекех, тӑнласа, васкамасӑр литтераттурӑ вуламан писсаттӗл нађар писсаттӗл пулӗ. Пит васкамасӑр вулас пулат̆, кашни сӑмаха, кашни пуплеве курса ӑнланса пымалла пултӑр. Ҫапла васкамасӑр пилӗк страницӑ вулани те писсаттӗле васкаса, йӗркесӗр темиҫе ҫӗр страницӑ вуланинђен ытла усӑ кӳрет. Вуласа есӗ астуман ҫӗртенех икӗ йапала тупатпӑр: ҫыру ђӗлхине тӗрӗс ҫырма вӗренетпӗр, тепӗр йенђен тата ҫав вуланӑ литтераттурӑллӑ происветенисем тӑрӑх ҫырмалли йӗркесемпе паллашатпӑр. Ҫырмалли йӗркепе хӑнӑхсан вара есир кирек мӗнле шухӑша та илемлӗ, ҫӑмӑл калав йе овђӗрк, йе театтӑр ваљђи пйессӑ, йе тата сӑвӑ туса ҫырса пама пултаратӑр. Анђах вуланӑ вӑхӑтра писсаттӗл ӗҫне вӗренес тесен

малтан кĕнекере мĕн шырамаллине пĕлес пулаť. Ун çинђен кирлĕ таран малалла калăпăр, халĕ литтераттурăран примерсем илсе, писсаттĕлсен ђăнахах хăйсен ђĕлхине аванлатакан уйрăм йĕркесемпе, паллă прийомсемпе паллашăпăр.

**Илемлĕ, хутошĕствăллă çырăвăн пуçламĕшĕ—опписсани.**

Ђăваш шкулĕнђе 5—6 çул вуламалли хрестоматтин 197-мĕш странитсинђи Тимитрийĕвăн «Майна Вира» йатлă калавне илер. Унта малтан ĕç шыракан хресђен Кавкаса—Паттум хулине пырса кĕнине кăтартса панă. Çыракан çаксене кăтартасшăн: малтан хула сăнне-питне кăтартаť, унтан хулара тĕрлĕ çын тĕрлĕ пурăннине кăтартса параť: хăшĕ пĕри çак пысăк хулара ырлăхра пурăнаççĕ, теприсем—сăкăр илме те укçа тупаймаççĕ. Йепле кăтартса параť çаксене çыракан? Хула тĕсне кăтартакан татăка вырăнсăр кĕртсе лартсан вăл интереслех пулмасť, ытлашши пек туйăнаť, çаплах тата çынсем хăшĕ пуйан, хăшĕ ђухăн пурăнаççĕ тесе çырни те калавра килĕшӳллех пулмасť, мĕншĕн тесен ăна пурте пĕлеççĕ, ун çинђен ђылай çырнă. Çапла килĕшӳсĕр, вулама йăвăр ан пултăр тесе, Тимитрийĕва вĕсене урăхла кăтартса, хăй калассине те каласа параť, вулакана та вулама çăмăл, интереслă тăваť. Вăл ăна çакăн майлă çырса параť: халиђђен курман йапаласене курнипе хресђен хулаваррине ђараннă. Çакăнта вара писсаттĕлнитсă хресђен хулара мĕн курнине, вăл мĕн шухăшланине каласа кăтартаť. (Ак ĕнтĕ опписани пулђĕ те, ăна кĕртсе лартнине хăвăр та сисмерĕр). Çав вăхăтрах вăл (хресђен) хырăмĕ выçнине сисет (ак ĕнтĕ автăр хăй хушса каламасăрах капиталисăм опшĕствинђе тĕрлĕ клас пурăннине кăтартса параť). Йепле кăтартса пађĕ-ха çакна вăл? Мĕскер тĕлĕнмелли пур-ха унта? Акă мĕскер: ђи малтан писсаттĕлнитсă хăй шухăшĕсене хăй сăмахĕпе каласа памасť, пурнăç татăкне кăтартса параť; иккĕмĕшĕ—çапла çырса вăл ăна вулакан пуçне манмалла марах хăвараť: йĕри тавра пуйанлăх, пурте çителĕклĕ пулсан та, хресђенĕн çиме çăкăрĕ çук, унăн ăшĕ пĕрĕнет. Великканпа карлика (урăхла каласан, шутсăр пысăк çынпа пит пĕђĕк çынна) пĕрле тăратсан великкан тата та пысăк пек туйăнаť, карлик пăхма çук пĕђĕк пек туйăнаť, вăл ахаљ ђух та пĕђĕкскер, пысăк çын çумĕнђе пĕтĕмпех сухалаť. Çавнашкалах кунта та, пуйанлăхпа çиме çуккине танлаштарса, автăр тĕрлĕ классен пурнăçне кăтартаť.

Тата тепӗр пример çамрӑк писсаттӗлнитсӑн Çейфуллинӑн «Тивӗççӗр ӗç тӑвакансем» йатлӑ калавӗнђен илер. Унта вӑл тӑлӑх, урамра сӗтӗрӗнсе çӳрекен ађа çинђен каласа кӑтартаҭ; кайарахпа çав ађа, ађа çуртне çакланаҭ. Йулашкинђен унта çав ађасем вӗрентекенӗсене йуратнипе тата вӑл майланӑ ӗçлӗ пурнӑçа йуратса çитнипе, выçлӑх вӑхӑт майӗпе çителӗклӗ çӑкӑр пулмасан та, ађа çуртӗнђен кайасшӑн мар. Ађасен выçӑллӑ-тутӑллӑ пурнӑçӗ çинђен сырнӑ майпа вӑл калавра çанталӑк çинђен те кӗскен кӑна сырса кӑтартаҭ. Çавна вӑл ахаљрен анђах кӑтартса памасҭ: тискер çанталӑк карттинӗ умӗнђе выçӑ ларакан ађасен пурнӑçне тата хурлӑхлӑрах, йӑвӑртарах кӑтартасшӑн тунӑ ӑна, вӗсен йӑвӑр пурнӑçӗ пире шухӑша йатӑр тесе çапла сырнӑ ӑна. Акӑ çав татӑка хӑвӑр вуласа пӑхӑр:

«Тирпейлӗ хуçа пулма вӗсем вӗренсе çитеймен-ха. Çула пуçтарса хунине çисе йанӑ. Кӑмпасем пит кӗскелсе çитнӗ. Паранкине пит кайа йулса кӑларнӑ. Çуррине йал сынписем вӑрласа пӗтернӗ. Пахђа çимӗç ытла та сахал пулнӑ. Хулара нимӗн те çук. Кӗрпе те пӗтсе килет. Ађасен пиђӗсем пӗрӗнсе тарса кӗђӗç. Ывӑна пуçланипе иртерех сывӑрма пуçларӗç. Çапах та ђас ђасах ахӑлтатса кулкалани илтӗнкелет.

Мартынӑв кулкалаҭ те кӑшкӑрашма та ђарӑнаймасҭ:

...пиçиххисене хытӑрах сыхӑр, ђӑматанӑрсене туртса хурӑр! Анђах кунран куна «çӑварне сарма» ђарӑнаҭ, пӗрмай стантсине çӳреме пуçлаҭ.

Пӗр каçхине кӳлӗ тилӗрсех кайрӗ. Хуйхӑллӑ сасӑпа ђулсем çумне çапӑнаççӗ хумӗсем. Унтан çиллине шӑнараймасӑр ђарӑнайми акӑрашаҭ кӳлӗ.

— У-ух, у-ух, у-ух!..

Çил çтенана килсе перӗнсе ђӗтретет. Çӗмӗресшӗн тӑрӑшаҭ. Трупара мӗкӗрет: ишетӗ-ӗ-ӗ-п, çӗмӗретӗ-ӗ-ӗ-п! тенӗ пекех тӑлхӑраҭ.

Çил ђарӑннӑ вӑхӑтра уланӑ сасӑсем илтӗнеççӗ: Кашкӑрсем-и йе выçӑхнӑ йӑтӑсем?» [1]).

Йурийех çак çанталӑка кӑтартса панӑ татӑка калавран кӑларса пӑрахар-ха—калав илемӗ ђакатех. Çапла ӗнтӗ епӗр акӑ мӗскер куратпӑр: çанталӑк карттинне йепле майпа, тата хӑçан кӑ-

[1]) „Ђӑваш шкулӗнђе 5—6-мӗш çул вуламалли хрестоматтин" 325-ш стр-ђе

тартса парасси вăл литтераттурă ĕçĕн уйрăм мелĕ. Малтанхи примерта оппиcани урăхла, иккĕмĕш примерта тата урăхла: малтан хурапа шура кăтартнă пек, пĕр йенђен пуйанлăха, тепĕр йенђен ђухăнлăха кăтартса çырнă, иккĕмĕш примерта апла мар, унта йăвăр хурлăхлă пурнăçа çанталăкăн та тискер йенĕпе танлаштарса çырнă.

Çак икĕ примертанах ĕнтĕ есĕр кĕнеке тавраш вуланă вăхăтра писсаттĕл йепле майпа кăтартса панине астуса уса курма пултарăр. Вуланă ђух çакна лайăх астăвас пулаť: 1) мĕншĕн автăр çанталăк çинђен çырса кăтартнă (опписсани), 2) йепле майпа çырса кăтартнă происветенире сопыттисем çанталăк çинђен çырнипе пĕр майлă йенђен, йе вĕсен уйрăмлăхĕсене танлаштарсан? Çапла вара есĕр хăвăр та çанталăк çинђен çырма вĕренĕр. Пађуран «Выçлăх çул» йатлă калавне сăнаса тухăр. «Сунтал» № 4. 1927-ш ç. Халĕ ĕнтĕ писсаттĕл ĕçне пĕтĕмĕшпе пăхса тухар.

## Ĕçе мĕнтен тытăнмалла.

Çырма тытăниђђен малтан темă тупса хатĕрлес пулаť, урăхла каласан мĕн çинђен çырассине шухăшласа, тупса хума кирлĕ, унтан вара ăна сÿшете çавăрас пулаť, урăхла каласан суйласа хунă темăна сарма план пекки тăвас пулаť, çав план тăрăх тин вара хăвăн тĕп шухăшна вулакана каласа кăтартатăн. Пĕђĕк сăвăсем çырнă ђухне çеç плана çырнă вăхăтра тума пулаť, калавпа пйессă çырас пулсан малтан хатĕрленĕ плансăр нимĕн те тума çук. Çырнă вăхăтра, хăш ђухне, çĕнĕ татăксем кĕреççех йе тата малтан шухăшласа хунине кăларса пăрахма та килет, ун пеккисем пулкалаççех, çапах та малтан çырма лариђђен ĕçĕ мĕнле йĕркепе пырассине, тĕп шухăш йепле йĕркепе сарăлса пырассине пĕлсе тăрас пулаť.

Ĕçе çырса пĕтериђђен малтан, хăш вăхăтра, мĕнле те пулин уйрăм татăк (стсенă) йе çанталăк çине (опписсани) çырас шухăш килсен (вăл ђас ђасах пулкалаť) ларăр та çырăр ун çинђен. Çавăн пек татăк-сыпăк сирĕн пулас происвтенинђе, хăш ђух, пит паллă, илемлĕ вырăн йышăнма пултараť.

Çапла ĕнтĕ ђи малтан темă кирлĕ. Ăçтан тата мĕнле темă илмелле-ши? Паллах ĕнтĕ, хăвăр мĕн пĕлнине çырас пулаť, пурнăçра мĕн курнине, мĕн сисĕннине, сире мĕн кăмăла кайаť, мĕнле йапала килĕшмен пек туйăнаť—çавăн çинђен çырас пулаť.

Пур йапаларан та темӑ тума пулаť, урӑхла каласан, пур йапала ҫинђен те происветени ҫырма пулаť. Анђах ҫакна калас пулаť: вулакана пуринђен ытла хаљхи пурнӑҫа кӑтартакан темӑ туртаť, вулакан хаљхи пурнӑҫ ҫинђен пӗлесшӗн. Сире ҫыракансене хаљхі. темӗсенђен, хӑвӑр авантарах пӗлекеннисем, хӑвӑра ҫывӑхраххисем, сире шухӑша йаракан, савӑнтаракан, йе тепӗр йенђен хуйха йаракан, салхулантаракан, ҫилентерекен темӑсем ҫинђен ҫырма ҫӑмӑлтарах пулӗ.

Темӑ суйласа хурсанах ҫӳшет хатӗрлеме тытӑнас пулаť, урӑхла каласан, темӑ тупса хурсанах вара происветени мӗнле йӗркепе ҫырӑнса пырассине хатӗрлесе хурас пулаť. Малтанхи стсенах (епӗр ӑна сыпӑк тийӗпӗр), пирвайхи сыпӑкнех тӗрлӗрен кӑтартма пулаť: йе малтан происветенири ҫынсем шавланине, калаҫнине, кӗрешнине кӑтартса параť. (Патманӑн «Ељук—шеф» йатлӑ калавӗ: «Отрет килет» тенӗ хыпартан пуҫланаť).

— «Ахаљ кӳпсе выртатӑн. Кӗлеме кай услап терӗ Микула муђейс кинӗ, пуҫӗнђен хутаҫпа персе» тесе тытӑнаť Курак Иванӗ хӑйӗн «Микула муђей» калавне («Сунтал» 11-мӗш №, 1926 ҫул), йе малтан, пуҫламӑшӗнђе лӑпкӑ пурнӑҫа кӑтартса пама пулаť. (Елкерӗн «Шуҫӑм килнӗ ђух» йатлӑ калавне тата Хумма Ҫеменӗн «Стантсӑра» йатлӑ калавне сӑнаса тухӑр).

Малтанхи майпа ҫырсан ҫапла тытӑнма пулаť: «Пӳрте кӗрсенех епӗ ҫынсем пӑшӑрханнине сисрӗм; «ВӖК»-рен пиђете такам илсе кайнӑ» т. мал. та. Йе тата—«Марйе тепӗр ӗнине сума тытӑнӑђђӗ ҫеҫ, йал хыҫӗнђе темӗскер кӗрӗслетни илтӗнђӗ...».

Иккӗмӗш йӗркепе ҫырас тесен, ак ҫапла пуҫлама пулаť: «Пирӗн вулӑсра пӗр ҫын пурӑнађђӗ...» йе тата «Йал пит айлӑмра лараť. Ун айккинђе» тата малалла та.

Хӑвӑр калавӑра лӑпкӑ стсенӑран тытӑнсан («йал пит айлӑмра лараť»... йе «Иртнӗ Керман вӑрҫинђе»...) малалла вара калава хускатса, ҫыхӑнтарса йама, йе ҫӗнӗ ҫын, йе тепӗр ҫӗнӗ сыпӑк кӗртсе хума кирлӗ, ҫапла тусан вара малалла ҫырма ҫӑмӑлланса кайаť.

Ҫакӑн ҫинђен аванрах ӑнланас тесен, пример илсе пӑхар. Илӗпӗр 1923 ҫ. вилнӗ А. Неверӑв йатлӑ писсаттӗлӗн «Марйе—пољшевиђкӑ» йатлӑ калавне. (Ђӑваш шкулӗсенђе 5—6-мӗш ҫул вуламалли хрестоматтин 302 стр-нђе). Унӑн теми (тӗп шухӑшӗ) ҫакӑн пек: Октӑпӗр револђутси хыҫҫӑн хресђен хӗрарӑмӗ тӳрӗ ҫул ҫине тухни, вӑл халӑх ӗҫне хутшӑнни.

Писсаттĕл çав темăна çак çӳшетпа сарса йараť: Револ̧утсил̧л̧ен хăйĕн «килсех пĕтмен» упăшкипе пурăнаť, вăл мĕн хушнинє, вăл ăна хĕсĕрленинне пурне те л̧ăтса пурăнаť. Октăпĕр хыççăн йалсене акиттаттăрсем салнаççĕ. Çапла пĕр акиттаттăр сăмах калана хыççăн, Марйе те сăмах илсе калаť, кайран çав акиттаттăра хăй патне л̧ей ĕçме илсе кайаť. Упăшки çиленет, вĕсем вăрçса, харкашса кайаççĕ упăшкипе. Анл̧ах Марйе ĕлĕкхи пек питех парăнасшăн мар: малашне вăл кĕнекесем, хаçатсем вулама тăрăшаť. Унтан вара вăл хĕрарăм пайĕнл̧е ĕçлеме тытăнаť. Упăшки турăпа хăраткаласа, ăна халăх хушшинл̧и ĕçрен пăрахтарасшăн, анл̧ах Марйе вăл вăхăталла турă çуккине, ăна пупсем анл̧ах шухăшласа кăларнине аван пĕлсе çитет.

Хĕрарăм пайĕнл̧е ĕçлесе, кĕнекесемпе паллашса, тата парттире тăракан вĕреннĕ çынсемпе калаçса, вăл халăх хушшинл̧и ĕçе ĕçлеме хăнăхса кайаť. Марйене кайарахпа Совета суйлаççĕ. Упăшкипе килĕштерейменççĕ. Советри ĕçĕ унăн пит ăнса пыраť.

«Хĕрарăм советра лараť, тата вăл комуниссен партти майĕпе ĕçлет» тесе мушиксем çиленсе çитеççĕ. Упăшки ăна уйăраť. Шуррисем килсен унăн йал̧ейккăпа пĕрле тармалла пулаť, вара вăл малашне пĕтĕмпех опшĕства ĕçне ĕçлеме пуçлаť пулмалла.

Çав калавăн çӳшел̧ĕ çапла ĕнтĕ. Мĕн куратпăр епĕр кунта? Акă мĕскер. Калав пуçламĕшĕнл̧е малтан автăр Марйен ĕлĕкхи пурнăçĕ çинл̧ен васкамасăр кăтартса параť, вăл пурнăçра улшăну таврăш палăрмасť-ха. Калава çĕнĕ çын кĕртсен анл̧ах кĕрешӳ хускалса кайаť—акиттаттăрпа унăн сăмахĕсем Марйене пĕтĕмпех урăх йенне çавăраççĕ. Çак вăхăтран Марйе пурнăçĕ улшăнса кайаť, вăл хăй урăх çынна çаврăннипе кив йăлапа кĕрешме тапратаť.

Çавăн пек çĕнĕрен хускатса, çĕклесе йаракан сыпăка калавра çыхăну (завязка) теççĕ, унтан маларахxи сас л̧ĕвĕсĕр, кĕрешӳсĕр сыпăка—пуçласа йараканни (исходное положение) теççĕ. (Пинерăн «Наçтук» йатлă калавне сăнаса тухăр).

**Калавăнваррипе йулашки.**

Тĕрлĕ просветенисенл̧е çыхăну тĕрлĕрен пуçласа йани тĕрлĕрен калавсене вулана хыççăн аванах курăнса тăраť: хăш л̧ух вăл çыхăнăва пуçламĕшĕнл̧ех кăтартса параť. «Марйе—пол̧шевил̧кăри» пек, хăш автăр ăна л̧ылай çырсан тин пуçласа йараť. Çав

майпа вӑл вулакана интереслентерет, вулакан малалла мӗн пулассине ӑсӗнђе тытса тӑрать, кӑтартса панӑ йапаласем, стсенӑсем мӗн тума пулнине сисме тӑрӑшать. Сӑмахран, ҫав «Марйе — полђшевиђкӑ» йатлӑ калавра Неверӑв малтан Марйе хуйхӑрнине кӑтартса панӑ пулсан, унтан вара вӑл упӑшкине урӑхла пӑхнине, хаҫатсем вуланине кайарахпа ҫеҫ кӑтартса парсан, ун хыҫҫӑн вара тин икӗ уйӑх малтантарах пулнӑ пухура мӗн пулнине каласа кӑтартнӑ пулсан — ҫавӑн пек пулатђӗ. Пухура пулнӑ стсенӑ кунта та ҫыхӑну пулса тӑрать, мӗншӗн тесен ытти сопыттисем пурте ҫавӑнтан пуҫланса кайаҫҫӗ, анђах кун пек, ун ҫинђен автӑр кайран тин систерсе хурать, кайран ӑнлантарса панӑ пек кӗртсе хурать. Хӑш ђухне ҫыхӑнӑва кайарах хӑварса ҫырни калава пит ҫӑмӑллатса, хитрелетсе йарать. Халђ ӗнтӗ ҫав «Марйе—полђшевиђкӑ» йатлӑ калаври паллӑрах вырӑнсене суйласа тупар. Паллӑрах вырӑнсем Марйен пурнӑҫне урӑхлатнӑ сӑлтавсем ҫинђен каланисем пулаҫҫӗ.

Ҫавӑн пек паллӑ вырӑнсем кунта ҫаксем пулаҫҫӗ: 1) Марйен револђутсиђђенхи пурнӑҫӗ, 2) акиттаттӑр сӑмахӗ хыҫҫӑн унӑн пуҫне урӑх шухӑшсем кӗни, 3) хӗрарӑм пайӗнђе ӗҫлеме тытӑнни, 4) Советра ӗҫлени, 5) йалтан пӑрахса тухса кайни. Хӑвӑр та куратӑр ӗнтӗ, калаври ҫак паллӑрах ҫӗнӗ вырӑнсем ӑна вӑйлатаҫҫӗ. Акӑ Марйе хӗрарӑм пайӗнђе ӗҫлени унӑн пурнӑҫӗнђе пирвайхи пухура сӑмах каланинђен ђылай вӑл пысӑкраххӑн курӑнса тӑрать, кайранхи вӑл советра ӗҫлени — хӗрарӑм пайӗнђе ӗҫленинђен те паллӑрах вӑхӑт, ӗҫ пулса тӑрать.

Ҫакна калас пулать тата: епӗр шутласа тухнӑ паллӑрах вырӑнсен икӗ вырӑн ӑраснах уйрӑм тӑраҫҫӗ: пӗри — малтанхи пурнӑҫа пӗр вырӑнта кӑтартакан татӑк, тепри — йулашки Марйе йалтан тухса кайни, кун хыҫҫӑн вулакан калав малалла кайасса кӗтмест. Анђах вӗсен хушшинђе уйрӑмӗ пур, малта каланӑ пек, пирвайхи ҫыхӑну хӑш ђух калавра пулмасть, йулашки йаланах кашни калавра пулмалла — ӑна мӗнпе пӗтни (развязка) теҫҫӗ.

Неверӑвӑн калавӗнђе мӗнле пӗтнине пӗтӗм калавӗнђен урӑхларах вӗҫленӗ: малтан, пуҫламӗшӗнђе, вӑл керойӑн пурнӑҫне кӑтартса парать, стсенӑсем кӑтартать, вӗҫленӗ ђух вара кайран пулнӑ сопыттисене кӗскен кӑна шутласа тухать. Акӑ йепле пӗтерет вӑл калавне:

«Пилĕк уйăха йахăн пирĕн патра ĕçлерĕ вăл, анђах пĕђĕк истори пулђĕ унта касаксем килсе тапăнђĕç. Марйе пољшевиксемпе урапа çине ларђĕ те тухса кайрĕ. Ăçта кайнине пĕлейместĕп. Тепĕр йалта ăна çынсем курнă пек илтĕнкелерĕ, вăл пулман пулĕ-и тен, урăххи ун манерли пулнă-и тен? Халĕ ун пеккисем пит нумайланђĕç...»

Калав пĕтрĕ те. Кайран Марйе мĕн шухăшланине, çак мĕн пур истори (вăл йалтан тухса кайсан йепле пурăнни) мĕнле пулнине писсаттĕл нимĕн те каламасť, вăл анђах та мар, тата вăл йалтан мĕнле майпа тухса кайнине те кăтартса памасť. Мĕншĕн апла турĕ-ха вăл? Ку майпа мĕн кăтартасшăн пулђĕ вăл? Акă мĕскер: çапла каласа кăтартнипе есĕ Марйе истори çакăнпа пĕтнине пĕлнисĕр пуçне, сисеттĕр те. Калавне есĕ ху мар, урăх çын вуласа панине итлетĕн пулсан та, çав калав вĕçне çыракан хăйне май вĕçленине сисетĕрех.

Çапла ĕнтĕ ку калавăн вĕçне урăхла манерлă çырса кăтартса панă. Пысăк повĕçсенђе çакăн пек йулашки татăкĕ ик-виç, йе хăш ђух тата ытларах та страницă йышăнаť, унта темиçе сопыттисем çинђен кĕскен кăна каласа кăтартаççĕ. Просветени çавăн пек йулашки татăкне еппилăк теççĕ. Çапла ĕнтĕ Неверăв калавăн вĕçне еппилăк формипе кăтартса панă. Ђас ђасах калавăн вĕçне урăх майпа çыраççĕ: калава сопыттисем пулса пĕтнинех çыраççĕ те, унтан вара пĕр икĕ йĕркепе пĕђĕккĕрех карттинă (сăмахран, çанталăк мĕнле тăнине) çырса кăтартаççĕ, йе тата автăр хăйĕн шухăшне çырса хураť. Сăмахран, Çерафимовиђ «Хĕрарăм йалĕ» йатлă (Ђăваш шкулĕсенђе 5-6-мĕш çул вуламалли хрестоматтин 305 стр.) калавĕнђи историн йулашки татăкне—акиттаттăрпа йамшăкĕ йалтан кайалла таврăннине çапла çырса пĕлтерет: «Шартлама сивĕпе шапшурă каç тăраť. Йĕри тавра тĕтре витĕр курăнкалаť». Йе Алентей «Çĕр çирĕм» йатлă калавне çапла сăмахсемпе пĕтерет:

«Çурхи хĕвел таса пĕлĕтрен пĕçертсе пăхаť. Кăнтăрла иртсен йулашки хут çĕр çирĕм çын çине куђђанса пăхрĕ,—унтан пĕлĕт татăкĕпе хупланђĕ те каллех вăйне çĕр çине йађĕ».

(Алентей «Çĕр çирĕм»).

Макçим Коркки (хăйĕн «Ашкăнакансем» йатлă калавĕнђе) сопыттисене çырса пĕтерсен, çырма хĕрринђе калаçакансем салаþнине кăтартса панă хыççăн, пĕр пĕђĕк стсенă кăтартса параť. Акă

3/Л-6

çав кĕске стсенă: «Çырма йенђен акăрашнă сасă илтĕнет: «Паршă çинђе: — е-е? Шуйттансем! Тавайă-ă-ăр лутка! Йан кайаť йĕри тавра. Йăвăçсем хушшинђе тепĕр о-у-у-у..!» тенĕ сасă саланаť.

Кокăљ тата «Иван Иванђăпа Иван Никифорђă йепле вăрçса кайни çинђен» йатлă повĕçĕнђе повĕçри икĕ керойа йулашки хут кайран курнине каласа панă хыççăн, тепĕр манерлĕ, уйрăм шухăш кĕртсе хураť: «Киђем ку тĕнђере пурăнма» тесе пĕтерет вăл повĕçне.

Калав çумне çакăн пек татăк çыпăçтарса хунине вĕçĕ (контсовккă) теççĕ. Калавсене вуланă ђухне тата çаксем палăраççĕ: контсовккăсене тĕрлĕ сăлтавпа лартаççĕ: йе вăл калаври калас тенине кĕскен калаť, йе тата автăрăн происветенире кăтартса панă шухăша систерет. Сăмахран: Кокăљ контсовкки икĕ улпут пурнăçĕ çинђен автăр мĕнле шухăшланине кăтартаť. Коркки хăйĕн контсовккипе калаври керойăн хăрушă, тискер пурнăçне, керой пек çынсене пĕтерекен пурнăçăн тискерлĕхне тата ытларах палăртаť.

### Пĕр сыпăкран тепĕр сыпăка куçасси.

Калав çырма вĕренес тĕлĕшрен, паçăрхи пекех, «Марйе—полђшевиђкă» йатлă калавах авантарах пăхса тухар. Унта епĕр паллăрах сыпăксене уйăртăмăр, çавăнтах тата калавра вĕсем пурте тĕрлĕ вырăн йышăнса тăнине асăрхарăмăр. Ак астăвăр-ха:

| Сыпăксем: | Калавра ĕçсем мĕнле вырăн йышăнса тăраççĕ: |
|---|---|
| 1. Марйен револђутсиђђенхи пурнăçĕ. | Ку пуçламĕшĕ, кунта хумханни тавраш палăрмасť. |
| 2. Акиттаттăрпа Марйе сăмахĕсем. | Ку тейçтвин пуçламĕшĕ, сыхăнăвĕ пулаť, кунтан вара хумханусем пуçланаççĕ. |
| 3. Марйе хĕрарăм пайĕнђе ĕçлени. | Кусем иккĕшĕ ђи кирлĕ сыпăксем, вĕсем тейçтвийе малалла ўстерсе вăйлатса йараççĕ. |
| 4. Ăна совета суйлани тата вăл советра ĕçлени. | |
| 5. Марйе комуниссемпе тарни. | Калав мĕнпе пĕтни. Кунта еппилăк формипе çырнă. |

1520

Çапла ĕнтĕ калава мĕнле йĕркелесе çырни кунта аван курăнђĕ. Анђах акă мĕскер пурха унта: иккĕмĕш номĕр тĕлĕнђе манăн «Акиттаттăрпа Марйе сăмахĕсем çинђен» çырнă. Виççĕмĕш номĕр тĕлĕнђе «Марйе хĕрарăм пайĕнђе ĕçленине» кăтартнă. Анђах иккĕмĕш номĕртен виççĕмĕш номĕре калавра йепле куçмаллаха? Çапла, ĕнтĕ есĕр хăвăр калавăр вађђи çак (малта кăтартнă) сыпăксене хатĕрлерĕр. Йурать. Анђах хăй сăмахĕсем хыççăнах Марйе хĕрарăм пайне сиксе куçаймасть. Çавăнпа çак сыпăксене хатĕрленипе кăна мар, тата пĕр сыпăкран тепĕр сыпăка куçмалли йĕркесене тупас пулать.

Пухура тухса каланă сăмахсем хыççăн, хĕрарăм пайне ĕçлеме куçаҕђен ак çаксене куратпăр: пухура тухса каланă сăмахсем хыççăн упăшкипе хархашкаланине, вăл хархашусенђе Марйе куллен кун упăшкине парăнми пулса пынине; вăл хаçатсем вулама тытăннине, килте ниçта тухмасăр, кăмака кутĕнђе ĕçлени ăна йăлăхтарнине, вăл йалти пухусене йаланах çÿреме пуçланине куратпăр. Писсаттĕл çак сыпăксене шухăшласа кăларнипе, тата вăл çав пĕрпĕрне çыхăнтаракан пурнăç татăкĕсене килĕшÿллĕ стсенăсемпе кăтартса панине анђах епĕр Марйе патшалăх ĕçне ахаљ мар, пурнăç хушнипе хутшăнса кайнине куратпăр. Каллавра çав вырăнсене (татăксене) вулама тытăнсанах, епĕр Марйе патшалăх ĕçне ĕçлеме кайасса сисетпĕр. Марйен çав ĕçе хăй шухăшласа кăларнинђен мар, пурнăç хăйех Марйене çавăнталла йертсе пырать. Паллах ĕнтĕ, калавăн çак тĕрлĕ пайĕсене çыхăнтаракан варринђи татăкĕсене епĕр кĕскен кăна мар, килĕшÿллĕ стсенăсемпе кăтартса пама тăрăшатпăр, мĕншĕн тесен вĕсем те тĕп сыпăксем пекех пит кирлĕ татăксем. Çак татăксене вуланă çемĕнех епĕр калавра пит пысăк, паллă ĕçсем пуласса кĕтетпĕр.

Калаври тĕп пайсене çыхăнтаракан татăксем меллĕрех, килĕшÿллĕрех пулђђăр тесен, тĕп сыпăксене пит пĕлсе, авантарах шухăшласа хатĕрлес пулать; унта пĕр-пĕринпе кĕрешекен вăйсене палăртни кирлĕ: сăмахран, Неверăвăн, пĕр йенђе Марйе, тепĕр йенђе упăшкипе мушиксем. Кусене автăр пĕр-пĕрне хирĕç тăракан вăйсем кĕрешнине кăтартма çапла тунă, вăл майпа тĕрлĕрен сопыттисем хăйсемех тухса пыраççĕ.

Йурийех çав калавăн виççĕмĕшпе тăваттăмĕш сыпăксене астуса илерха. Унта акă мĕнскер куратпăр:

| ТĔП СЫПĂКСЕМ | Пĕр-пĕринпе хирĕçекен вăйсем | Вĕсем кĕрешни |
|---|---|---|
| 3) Марйе хĕрарăм пайĕнђе ĕçлени. | Марйе патшалăх ĕçне пикенсе ĕçлеме тытăнаҭ. Упăшки униăн кăмăлсăр, çиленет. | Марйе парттийе кĕресшĕн. Упăшки ăна вăрçаҭ, «турăпа» хăратаҭ. |
| 4) Марйене совета суйлаççĕ. | Марйе ку ĕçе пĕтĕм вăйне парса ĕçлеђђĕ. Мушиксемпе унăн упăшки: хĕрарăмсем патшалăх ĕçне ĕçлемелле мар, вĕсем вăл ĕçе ĕçлеме пултараймаççĕ, тесе шухăшлаççĕ. | Марйе çапах та совет-ра ĕçлет. Мушиксем ăна куçĕ умĕнђех вăл ĕç ун ĕçĕ маррине систереççĕ. Упăшки унтан уйăрăлаҭ. |

Çак калавăн й у х ă м ĕ н ђ е çав сыпăксем пит паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çапла ĕнтĕ калава пăхса тухса епĕр, калавăн тĕп формине уйласа, ăнласа илме пултаратпăр. Анђах епĕр урăхла происветенисем те çырма пултаратпăр, унта пĕр-пĕр ĕç сыхăнса пуçланса кайни те, кĕрешӳ те, ĕçсем пулса пĕтни те çук, палăрмасҭ. Ун пек происветенисене о ђ ђ ĕ р к теççĕ.

**Ођђĕрксене йепле çырмалла?**

Мĕнле пулсан та ођђĕрксенђе те, йухăмсем пулмалла. Ăна йепле тумалла? Калăпăр, сирĕн мĕнле те пулсан савăта кайса курни çинђен çырмалла. Сирĕн пуçăрта есĕр савăтра сăнанă йапаласем пурах, анђах ху курнисене, ху шухăшусене вулакана каласа парас тесен, тата ăна интереслес тесен, вĕсене кашнине хăй вырăнне майласа çырас пулаҭ. Пĕр йапала çинђенех темиçе хут калас мар тесен, малтан пĕрин çинђен, унтан тепĕр йапали çинђен йĕркипе каласа парас тесен, çырас умĕн сирĕн п л а н хатĕрлес пулаҭ. Вăл питех йăвăр мар. Иккĕмĕш тата: малтан сирĕн хăвăр курнисенђен пĕђĕккĕрех, питех паллă мар йапаласем çинђен калас пулаҭ, унтан вара паллăраххисем çинђен, йулашкинђен—ђи кирлисем, ђи паллисем çинђен çырас пулаҭ. Çаплалла йĕрке калаври йухăм пекех ођђĕрка та интереслентерет, вулаканăн вуланăçем малалла вулас килет, мĕншĕн тесен малалла тата кирлĕрехxи пурри аван сисĕнсе тăраҭ. Йулашкинђен, калаври пекех, вĕçлесе пĕтерме йураҭ...

Савăта кайса курни çинђен çырмалли маттериалсене епĕ хам планра акă мĕнле майласа хурăттăм. Малтан кĕскен кăна çав савăта кайма пикенни çинђен, тĕрĕсрех каласан, савăта кайни çинђен: лавçă, çанталăк çинђен. Ик-виç йĕрке вара пынă ђух савăт

мĕнле куранса ларнине çырма йурат. Унтан савата пахса тухни çинђен—кăна вара ђылайах çырма йурат; савăтра йертсе, кăтартса çÿрекен, ĕçлекенсен çийĕ-пуçĕ, вĕсен сăн-сăпађĕ, машшинсем т. ыт. те. Унтан вара ђи кирли çинђен (сăмахран: савăтра йепле ĕçлени, куђттур ĕçĕ, çтена хаçађĕ, технĕккăри мĕнле те пулсан çĕнĕ йапала тухни, тата ыт. те; пĕр сăмахпа каласан отђĕркри ђи кирлисене çырмалла). Унтан вара пĕр-ик сăмах кайалла таврăннине кăтартса вĕçлесе хуратăн. (Çак савăтри йапаласене курнă хыççăн мĕнле шухăшсем кĕнине, хресђенсем хитре машшинсăр ĕçлесе нуша курнине çырма пулат. Кусем пурте савăтра курнине паллăрах вырăна кăлараççĕ, вулакана та çав шухăшсемпе шухăшхăшлама пулăшаççĕ).

**Опписсани.**

Тĕрлĕрен ĕçсем пулса пыни вăл происветенин пĕр йеспĕ анђах. Тĕрлĕ происветенисене вуланă ђухне есĕр хăвăр та сăнанă пулĕ: калавра тĕрлĕрен ĕçсем, сопыттисем пĕрин хыççăн теппри пĕр татăксăрах тухса пымаççĕ, унта тĕрлĕ опписсанисем—çынсен сăнне-питне кăтартса çырни, урамсене, çанталăка кăтартса панисем тата ыт. те пулаççĕ. Кунта нимĕнле сопытти те çук. Кусем калавра тĕрлĕ йапаласем пĕр вырăнта тăнине, вĕсем мĕнле тĕслине кăтартса параççĕ, вĕсем пĕр вырăнтах тăнă пек курăнмаççĕ. Йе тата çанталăк мĕнле тăнине, таврари çĕр-шыв мĕнлине, йал мĕн тĕслĕ курăнса ларнине т. ыт. те çыраççĕ. Йе тата происветенири çынсем пурнăç çине мĕнле пăхнине, вĕсем ĕненекен йапаласем çинђен те çырма пулат. Паллах ĕнтĕ, ку тĕлте сопыттисем, йухăмсем курăнмаççĕ. Апла пулсан вĕсем калавсенђе тата ытти происветенисенђе те пит кирлех мар пуђ? Çук. Вĕсем те происветенири ĕçсемпе сопыттисем пекех кирлĕ вырăнсем, мĕншĕн тесен происветенисенђе çынсен (керойсен) кăмăлне, шухăшне каласа парасах пулат, çав шутах ытти опписсанисем те происветенире пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, вĕсем те кирлех, литтераттурăра çаксене пурне те кăтартса параççĕ. Ĕнтĕ калавăн тепĕр йенĕ пулат. Калавра тĕрлĕ сопыттисене кăтартмалла пулсан, çав опписсанисене ăçта кĕртсе хурас пулатха?

Пĕр шухăшласан ку йапала пит йăвăр пекех те туйăнмаст. Калăпăр: пирĕн çаплалла çынсем çав çав тĕлте, çаплалла опстановкăра пурăннине кăтартса памалла. Кĕрхи вăхăт.

Происветенири пĕр керой пурнăçа çапла пăхаť, тепри тепĕр тĕрлĕ пăхаť т. ыт. те. Çаксене йĕркепе малтан çырса тухăпăр, унтан вара калаври ĕçсемпе сопыттисене çыхăнтарма тытăнăпăр. Анђах капла хăтлансан мĕнле писсаттĕл пулма пултарăпăрха епĕр? Писсаттĕл пурнăçа карттин пек туса кăтартаť, писаттĕл происветени странитсисенђе пурнăç куç умĕнђе пекех курăнса пыраť, епĕр, ун вырăнне, кĕнђелер туса хутăмăр, пурнăçри йапаласене оппĕç туса анђах лартрăмăр. Ун пек оппсанисене вулакан, паллах, пĕтиђђен те вуласа тухмасť, тӳрех Кокăл калашле «киђем ку тĕнђере» тейĕ те, кĕнекине хупса хурĕ.

Мĕнле тумаллаха апла пулсан? Çапах та кирлĕ опписсанисене вырăнлă, пĕлсе çырсассăн, вулама ђарăнма мар, ытларах интересленме пултараť. Хăш-хăш опписсанисене происветенисенђе килĕшӳллĕ, вырăнлă лартсан, вулакан тействи çуккине сисмест те. Ђи малтан, çаксене авантарах астăвăр.

Çынсем çинђен, тĕрлĕрен çĕр-шывсем çинђен тата ыт. те çырас тăвас пулсан, ђ и к и р л и с е н е, паллăраххисене анђах суйласа илес пулаť. Сăмахран: кил-çуртри йапаласене çырса кăтартнă ђухне çĕр йапаларан пĕр-иккĕшне анђах суйласа илес пулаť. Вулакан есир каланине астутăр, систĕр тесен, вĕсем те çителĕклĕ, ытлашши кирлĕ те мар. Калăпăр: пирĕн отрет пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçнă вăхăтри уйăхлă каçа кăтартса памалла. Уйăх çутиллĕ каçра ђылай йапала пулма пултараť: унăн паллă вырăнĕсем темиçе теçетке. Çапах та есĕр вĕсене пурне те çырмастăр, в ĕ с е н ђ е н п а л л ă р а х х и с е н е, и л е м л ĕ р е х х и с е н е, асра йулмаллисене с у й л а с а и л е с п у л а ť — хайхи каç куçа йеппле курăнни пулђĕ те. Акă епĕ шухăшласа кăларни, есир урăххисене хăвăр шухăшласа тупăр: «Çĕрле. Салтаксем пĕр ĕретпе, лашисене пĕр пек пустарса пыраççĕ. Малти лашисен хăш-хăш ђух т а к а н ĕ с е м й ă л т ă р-й а л т ă р ç у т ă л с а к а й а ç ç ĕ» Çак татăкра епĕ, уйăхлă каçхи йапаласенђен лаша урисенђе уйăх çутипе таканĕсем йăлтăртатса кайнине анђах кăтартрăм. Есĕр çынсен пиђĕсене, çул çинђи кӳлле, шинелĕн тӳмесене, уйа, кĕпере, çуталса выртакан çула кăтартма пултаратăр; пĕр сăмахпа каласан, кирек мĕне илсен те, тĕрлĕ майпа çав йапаласемпе кашнипех уйăхлă çутă каçа кăтартса пама пулаť.

Йе тата опписсанисене т ĕ р л ĕ вырăна салатас пулаť, тĕрлĕ вырăнсене кĕртсе вырнаçтарас пулаť, кĕртес пулсан та çав оппис-

сани калавра кирлӗ пулсан анђах кӗртес пулаҭ. Калăпăр: сирӗн пӗр ҫын йумăҫсене ӗненни ҫинђеп сырса кăтартмалла. Анђах мӗншӗнха вăл йумăҫ патне кайиђђенех ун ҫинђен ҫырмалла? Йе тата калаври керойăн сăнӗ-пиђӗ курăниђђенех унăн аллисем йăвăҫ тымарӗ пек вăрăммине, сыпăклине мӗн тума ҫырса кăтартмаллаха? Малтан керой вăл аллисемпе мӗн те пулсан тунине кăтартас пулаҭ, малтан керой курăнтăрха вăл. Керой мӗн те пулсан ӗҫлет пулсан, унăн ӗҫлекен аллисем мӗнле тӗсли те кирлӗ пулаҭ. Ҫапла тусассăн вара карттинккă илемленет.

Хăвăрах шухăшлăр ӗнтӗ, алăсем ҫинђен мӗнле формăпа ҫырсан авантарах пулмалла пек? Сăмахран ҫакăн пек ҫырсан мӗнле пулӗ-ши? «Унăн куҫӗсем йăвашшăн, ăслă пăхнă, пиђӗ шăммисем палăрса тăраҫҫӗ, сăнӗ-пиђӗ шурăрах. Аллисем унăн ытти ҫынсен аллисенђен уйрăмах вăрăм—йăвăҫ тымарӗ пек, пайăрка-пайăрка хулăннăн курăнаҫҫӗ. Ҫӳреме вăл васкамасăртарах ҫӳрет»... Ҫав алăсемпех вăл пантитран пăшал туртса илнине, йе тата хăй йуратан хӗрарăма йуратса пуҫӗнђен ађашланине кăтартсан авантарах пулмӗши? Кун пек ђух йепле тумалла пулаҭха? Пирвайхи опписсанире аллисем ҫинђен ҫырни, ытти сăмахсем хушшинђе, палăрмасăрах, сисӗнтермесӗрех иртсе кайма пултараҭ, кайранхи пек ҫырсан пантитран пăшалне туртса илнӗ ђух, йе тата савнă хӗрарăма йуратса ађашланă ђух вулакансен пуҫне ђылай вăхăта йулма пултараҭ. Вулакан ăна ђасах манмасҭ, ҫитменнине тата вăл сопыттисемпе те аван ҫыхăнса йулаҭ, вулакан есӗр алăсем ҫинђен ҫырнине сисмест те.

«Марйе-полђшевиђкăра» та опписсанисем пур. Пăхса тухарха кунта вӗсене йепле вырнаҫтарса хунă. Унта тӳррипе каласан ҫанталăка кăтартакан опписсанисем ҫук, анђах унсăр пуҫне ытти опписсанисене (ҫынсем ӗненнисене, вӗсен кăмăлӗсене тата ыт. те) пит меллӗ, пит килӗшӳллӗ вырнаҫтарса хунă. Марйе упăшки ҫинђен ҫырнинех пăхар. Вăл питӗ ҫиленекен ҫын, ђас харкашма пăхаҭ. Арăмне нимле ирӗк те парасшăн мар. Турра ӗненекен ҫын, тата тӗрлӗ тӗшмӗшсене ӗненет. Арăмне кӗвӗҫет, вăл ăҫта ҫӳренине, кампа калаҫнине вăрттăн пăхса ҫӳрет. Кивӗ пурнăҫ ăшне путнă ҫӗнӗ пурнăҫа ăнланаймасҭ. Ҫаксем ҫинђен автăр пурин ҫинђен те пӗр тӗлте каласа кăтартмасҭ, кăштăн-кăштăн май килнӗ вăхăтра каласа систерет. Сăмахран: вăл турра ӗненни ҫинђен автăр вăл Марйене парттине кӗрес тесе турăпа хăратнă ђух систерсе

хурат̆. Вăл тĕшмĕшсене ĕненни çинђен йумăçсем патне кайсассăн систерет. Вăл арăмĕ хăй йенне сăмахпа çаврăнманнине сисет те, йумăçсем патне кайат̆, çавăн ђух вара автăр вăл йумăçсене ĕненни çинђен каласа кăтартат̆. Писсаттĕл вăл вырăна акă мĕнле çырса кăтартат̆: «Йумăç патне икĕ хут кайрĕ—анђах вăл та пулăшаймаст̆»...

Çапла вара опписсани вађђи: 1) п а л л ă р а х  й а п а л а с е н е  с ӳ й л а с а  и л е с  п у л а т̆, 2) вĕсене т ĕ р л ĕ  в ы р ă н т а, ăçта майа килнĕ çĕре салатас пулат̆, 3) май килнĕ ђухне, çав опписсанисене сăмахпа çырса мар, мĕнле те пулин паллăрах стсенăпа кăтартас пулат̆, çапла вара вăл вырăна вулакан ђас манмаст̆.

Çак йулашкине хытăрах, лайăхрах астăвас пулат̆: керойсен характĕрне кăтартнă ђухне автăр хăй сăмахĕпе çырсассăн питех килĕшӳллĕ пулмаст̆, керой вулакансен куçĕ умĕнђе мĕнле те пулин хăй ĕç тăват̆ пулсан, вăл пит те килĕшӳллĕ пулат̆.

Тӳррипе каласан, керойсен характĕрне кăтартас тесен тĕрлĕ майсем пур. Сăмахран: калаври тепĕр çынна есĕр керой çинђен, ун характĕрĕ çинђен калаçнă вăхăтра калаттарса пама пултаратăр. Йе тата, май килнĕ вăхăтра, керойа хăйне те хăй пурнăçĕ çинђен кĕскен кăна калаттарма пулат̆ (ак калăпăр: вăл вăрçăра пулни, ухатара, утă çулнă ђух, пĕр-пĕр çĕрте ĕçленĕ ђух мĕн пулни, туни т. ыт. те). Çапла майпа вăл вулакансен умĕнђе хăйĕн характĕрне хăйех кăтартма пултарат̆.

Çанталăка йе çĕршыв çинђен çырса кăтартас тесессĕн, ун пек ђух автăр хăйĕнђен çырма пултарат̆, уншăн керойа каллаттарма кирлĕ те мар. «Кăнтăрла çитсе килет; çулакансем, апат çинĕ хыççăн, канма ларђĕç. Хĕвел хĕртнипе типекен курăкăн тутлă шăрши сарăлђĕ» тата малалла та. Опписсанисене кирлĕ вăхăтра пĕлсе лартас пулат̆, унсăр пуçне тата ытти сыпăксемпе авантарах çыхăнтарас пулат̆. Хăш ђух тата, опписсани кĕртсе хăварас тесессĕн, сопыттисене çырассине ђарăнса тăмалла пулат̆. Çапла вара сопыттисем хушшине опписсанисем кĕртсе хума пулат̆. Есĕр кăтартакан опписсанийе вулакансем ђас ан манђăр тесен, çакăн пек варрине кĕртсе лартнисем пит пулăшаççĕ. Мĕншĕн тесен çапла тунипе (опписсанисем кирлĕ вăхăтра панипе) есĕр унăн шухăшĕсене урăх сопыттисем çине кайасран ђаратăр. Урăх сопыттисем çуккипе, опписсани вуланă вăхăтра, вулакан умĕнхи сопыттисене пит аван астуса йулат̆.

Калав çырас ёçри тепӗр ыйту—вӑл çав калавра кӑтартса паракан тӗрлӗ ёçсене опписсанисемпе пӗлсе вырӑнлӑ çыхӑнтарасси.

Кун çинђен епӗр кӑшт каланӑђђӗ те ӗнтӗ: 1) йе калаври вӑйлатакан, ӳстерекен опписсани çырас пулаҭ, йе 2) тепӗр май кӑтартса танлаштарса çырас пулаҭ.

Кусене çак примерсенђе курма пулаҭ. Калӑпӑр: ватӑ амӑшӗн ывӑлӗ вӑрçӑра пурӑнаҭ, унтан нимӗнле хыпар та килмест, амӑшӗ вӑйсӑрскер, пӗђђенех пурӑнаҭ. Ун çинђен каланӑ май çакӑн пек çанталӑка кӑтартса парар: çӗрле ђӳређе умӗнђе çил улаҭ, сӗм тӗттӗм. Çӑмӑр çӑваҭ, т. ыт. те. Çапла ӗнтӗ карђӑк та хуйхӑллӑ, тата çитменнине çанталӑкӗ те ђуна пӑшӑрхантараҭ. Пурнӑçпа çанталӑк (опписсани) çинђен çырни пӗр манерлӗ. Тепӗр пример: çав карђӑках, пурнӑçӗ те улшӑнман. Кунта урӑх тӗрлӗ опписсани параҭпӑр: çуркунне çитнӗ, пур тӗлте пурнӑç, çамрӑксем савӑнаççӗ, çанталӑк та савӑнса, кулса тӑраҭ, т. ыт. те. Пирвайхи примерта вӑйсӑр карђӑкӑн нушине, хуйхине опписсани ытларах ӳстерет, тата ытларах палӑртаҭ,—çанталӑк та кун пекех хуйхӑрса унӑн ђунне хурлантараҭ; тепӗр примерта, çурхи илемлӗ кун, пурнӑç савӑнни умӗнђе карђӑкӑн хуйхи тата ытларах курӑнса тӑраҭ. Шурӑ хутран мӗнле те пулсан кӗлетке касса кӑларса, алӑ çинђе кӑтартсан, вӑл питех паллӑ пулмасҭ, ӑна хура çине хурса кӑтартсан вӑл уйрӑмӑнах паллӑ курӑнса тӑраҭ, кунта та çавӑн пекех. Кусем çинђен епӗр «Тивӗççӗр ёç тӑвакансем» йатлӑ калава пӑхнӑ ђухне каласаттӑмӑр.

Хӑш ђух тата ӑста писсаттӗлсем опписсанисене вырӑнлӑ çӗре кӗртсе хунипе, калава пит хитрелетеççӗ. Вуланӑ ђух çав опписсанисем кунта кирлӗнех туйӑнаççӗ. Акӑ Вçеволот Ивановӑн «Парттисансем» йатлӑ калавне илсе пӑхар. Унта Çӗпӗрти хресђенсем шурӑ йӑнӑралсемпе çапӑçнине кӑтартса панӑ. Парттисансем паллӑ мар çӳлӗ вырӑна пырса çитнӗ. Вӑрçӑ пулмасан та çынсем çӗнӗ çӗре пырсан ӑна пӑхаççӗ, вӑрçӑра вара ӑна астӑвасах пулаҭ, мӗншӗн тесен унта кашни тӗмрен, кашни ђулран пуђӑ сиксе тухма пултараҭ. Çак вырӑнта писсаттӗл çанталӑк çинђен, вырӑн çинђен опписсани параҭ, анђах ӑна та вӑл хӑй сӑмахӗпе каламасҭ, пӗр парттисан йӗри тавра пӑхса тепӗрне каласа панӑ пек кӑтартса параҭ.

Çапла туни пит те вырӑнлӑ, пит те килӗшӳллӗ пулаҭ, ун пек ђух опписсани калаври ёçсемпе уйӑрӑлми пӗрлешсе кайаҭ. Вçеволот Ивановӑн вӑл вырӑна акӑ йепле кӑтартса панӑ:

«Купĭа (керой йађĕ. Ç. И.) хутаççипе пăшалне пăрахрĕ те— ухлатса йађĕ:

— У-у-у-у-у!

— У-у-у-о!..—тесе саланђĕ сасă таçта инçе—вăрманалла.

— Ак ĕнтĕ вырăн куçпа пăхма çук ыраттараĭ! терĕ Купĭа. Вăл таçта сикме хатĕрленнĕ пек кăшт пĕшкĕнсе-пĕшкĕнсе, Çелеçнов шыв ăсма кайса килнине тата Корпуђин вутă ђĕртнине пăхса тăђĕ.

Инçетре айалта, тусем хушшине хĕсĕннĕ пек, ылттăн кӳлĕ курăнса выртаĭ. Вăл катаран пăхсан пĕрре саррăн, тепре кăвакăн курăнса тăрса, тусем хушшипе пăрахнă пысăк сарă пиçиххи пек тăсăлса выртаĭ. Кӳлĕ хĕррине ђăрăшсем, ытти йăвăçсем карталаса тухнă. Кӳлĕн леш йенђи йăвăçсен вĕçлĕ тăррисем, çӳлĕ тусемпе пĕрлех пĕлĕтех перĕнме тăраççĕ. Йĕри тавра—вăрман, шыв, ђул.

Купĭа хырăмĕ çине выртрĕ те, айалалла пăхрĕ».

Çак опписсани вĕçĕнђе çапла çыраĭ автăр:

«Çак курăнса выртакан вырăнăн вĕçĕнђен ту çинелле çын пымаллăх сарлакăш сукмак тăсăлса хăпараĭ.

Купĭа Çелеçнов йеннелле çаврăнђĕ те:

Ку сукмак пирĕн паталла, ту çине килет вĕт, Антун. Пĕлтĕни» терĕ.

Çапла, ĕнтĕ, калаври ĕçсене опписсанисемпе т ĕ р л ĕ м а й п а ç ы х ă н т а р м а п у л а ĭ, вĕсене пурне те шутласа тухма кирлех те мар. Епĕр çыракансемшĕн ђи кирлисене куртăмăр ĕнтĕ, Çав «Парттисансем» йатлă калавранах тепĕр вырăн илсе пăхăпăр та, вара опписсани çинђен калаçма ђарăнăпăр.

Епĕр çак айалта кăтартнă татăкра çанталăкпа çĕршыв çинђен çырнине иртнĕ сопыттисемпе пĕрлештерсе, çыхăнтарса хуман пек туйăнаĭ, вăл татăка сасартăк кăна кĕртсе лартнă пек туйăнаĭ, çапла майпа автăр малалла тепĕр сопытти çинђен калассине систерет, малалли сопыттипе вара çак опписсани пит тĕплĕ çыхăнса кайаĭ;

«Куç курми тĕттĕм, хыр йăвăçĕсене пӳрнепе сăтăрнă пек илтĕнет. Аслати аваĭаĭ, çиçĕм тусем çине кĕре-кĕре кайаĭ, тулсем тăвăлпа шавласа лараççĕ.

— Çуллахи Хветĕр кунĕ аслати пулђĕ, терĕ васкамасăр Купĭа— тырăсене пуçтарма кансĕр пулаĭ ĕнтĕ»...

Çакна мĕншĕн çырни паллах ĕнтĕ; аслати аваĭнине автăр керойсене çĕр ĕçлени çинђен калаçтарасшăн кăтартнă, вĕсем ун çинђен калаçни вĕсен характĕрне пĕлтерме кирлĕ.

Çапла, ĕнтĕ, епĕр мĕн кирлисене пурне те ăнланса çитрĕмĕр, калавра тействисене йепле çырассине те тата опписсанисене йепле вырнаçтарса пырассине те куртăмăр.

Йулашкинђен тата çакна каласа хăварас пулаť: ху курнă пек, ху тунă пек çырма йураť (Кайрăм, Епĕ куртăм... Епĕ турăм...), тата калаври çын каланă, тунă пек кăтартса çырма йураť.

Калава ытти çын калаçнă пек туса çырас пулсан, калаври сăмахсем те çав çын сăмахĕсем майлă пулмалла. Неверăв çав «Марйе полђшевиђкă» йатлă калавĕнђе çавăн пек тăваť: калава Марйене питех йуратман хресђен сăмахĕсемпе çыраť. Автăр хăйĕнђен пĕр сăмах та хушмасť. Çапла майпа çырнипе уйрăм стсенăсем тумасан та паллă пулаť, мĕншĕн тесен çак калаври çын хăйĕн сăмахĕсенђе ун çинђен каласа кăтартаť. Сăмахран ак çакна пăхăрха (кунта вăл хресђен Марйене Совета суйлани çинђен каласа кăтартаť, акă унăн сăмахĕсем: «Епĕр шалт тĕлĕнетпĕр. Вăйă пекех туйăнаť. Вулăсри советра пирĕн ĕçсене хĕрарăм туса тăраť. Кулмалла». Кашни калава йе малта кăтартнă майлă, йе тепĕр май (ху курнă тунă пек) çырма пулаť. Çапах та малтан, çырма пуçласан çеç х ă в ă н т а н каласа çырни çăмăлрах пулмалла, мĕншĕн тесен урăх çын сăмахĕсемпе çырас тесен ђылай вĕренни, пурнăçа пĕлни кирлĕ.

Калав çырас йĕркене пăхса тухнă хыççăн, малалла ĕнтĕ, сăвăсемпе пйессăсем çырасси çинђен калаçма пулаťђĕ те, анђах кунта пĕр йапала çинђен каласа хăвармалла пулаť. Пур литтераттурăллă происветенисен те, пĕр йенђен пăхсан, пĕр пек паллăсем пур (унтан пуçне уйрăмĕсем те пур, вăл паллах), сăвăсемпе пйессăсем çинђен кĕнеке йулашкинђе калаçăпăр, хаљ калав çырасси çинђенех калаçмалла пулаť.

Кунта епĕр литтераттурăллă ђĕлхере мĕнле уйрăм паллăсем пуррине, вĕсене мĕнле çырмаллине авантарах пăхса тухăпăр, вăл уйрăмсем сăвăсем çырнă ђух та, пйессăсем çырнă ђух та, тата калавсем çыр ђух та кирлĕ пулаççĕ.

Калаври сопыттисене мĕнле çырмаллине, пĕр сопыттийе тепринпе йепле çыпăçтармаллине епĕр кăшт пĕлетпĕр ĕнтĕ, хăш-хăш опписсанийе йепле çырмаллине, ăна ăçта вырнаçтарса хăвармаллине те пĕлетпĕрех. Пирĕн пуçра пĕр шухăш пур, вăл шухăша епĕр вулакана каласа парасшăн. Анђах калавне çырманха. Ăна

çырас пулаť, кашни сăмахне авантарах виçсе илес пулаť. Çапла вара, хитререх, пĕлерех çырас тесен, сăмахсене çырма вĕренес пулаť.

Ђи малтан ху шухăшусене тĕрĕс, тата ăнланмалла çырас пулаť. Ытти сăмахсенђен сирĕн шухăшăра тĕрĕс кăтартакан сăмахсене анђах суйласа илес пулаť. Сăмахран калăпăр: пўртре хуçăк уралла сĕтел ларнине каласа парас тесе, есĕр «пўртре нађар сĕтел лараť» тесе çырма пултараймастăрах, мĕншĕн тесен «нађар» сирĕн шухăша тĕрĕс кăтартса памасť. Апла каланă хыççăн вулакан сĕтел çинђен тĕрлĕ шухăшлама пултараť, вăл йе килĕшўллĕ мар пулма пултараť, йе ларма меллĕ мар, йе тата таса мар, пĕђĕк те пулма пултараť т. ыт. те. Пурте вĕсем «нађар» сĕтелсем пулаççĕ. Анђах сирĕн пуçăрта вăл сĕтел мĕнле иккенĕ паллах: çавăнпа вара çырнă ђух та тĕрĕс кăтартса парас пулаť, мĕнле сĕтел ха вăл, вăл мĕншĕн пит «нађар»? Урăхла каласан, тўрех «хуçăк уралла сĕтел» тесе çырас пулаť.

Т ĕ р ĕ с çырни вăл—ăнланмалла çырнинђен килет. Кунта кĕнекесем вулани, тата крамматтĕк правĕлĕсене вĕренни пулăшма пултараť. Тĕрĕс сăмах вулакана—вулама та çăмăл, ăнланмалла та пулаť, тĕрĕс мар çырсан—вăл сире ăнланаймĕ те.

Кусене пĕлмесен илемлĕ происветенисем мар, пĕђĕк саметкă та çырма çук. Кунтан пуçне тата сирĕн хăвăр пуçăрти шухăшсене илемлĕ (вырăсла: к а р т т и н н о) çырма вĕренес пулаť. Йурийех литтераттурăран меллĕрех примерсем илсе пăхарха, писсаттĕлсем мĕнле майпа пит хитре, йака çыраççĕха? Вçевăлăт Ивановăн «Пронепойĕс» йатлă калавĕнђе(калавра вăл хресђенсем шурă квартейтсăсен проневикĕпе кĕрешнине кăтартса параť) вăрмантан пойĕс с а с а р т ă к с и к с е т у х н и н е кăтартакан вырăн пур.

> «Хырсем хăйсен хушшинђен пронепойĕс к ă л а р с а ы в ă т р ĕ ç. Вăл хăй сарăрах тĕслĕ, тăватă кĕтеслĕ, унăн к у ç ш ă р ç и с е м çиленсе пăхнипе çапçутă курăнаççĕ. Пĕлĕте пĕр вырăна к ă в а к а р т с а йађĕ».

Кун çинђен урăхла калас пулсан, ак çапла калама пулаťђĕ: «Вăрмантан пронепойĕс тухрĕ». Пулђĕ те вара, тата мĕскер кирлĕ? Анђах капла çырсан тĕрĕс маррине такам та кураť: вăрманне илсен те—вăрман тĕрлĕ пулаť, «вăрмантан» тенипе кăна мĕнле вăрмантан тухни паллă мар, унта хыр вăрманне кăтартас пулаť. Ăна кăтартсан карттинккă пĕтĕмпех урăхланаť, иккĕмĕшĕ тата,

унта килĕшӳллĕ çырман, пойĕс сиксе тухни палăрмасть. Çавăнпа «тухрĕ» сăмах унта вырăнлă пулмасть. Çын пулсан, тухнă пулĕҫҫĕ, пойĕс йерипен тухмасть вĕт, вăл, ăна такам к ă л а р с а ы в ă т н ă пек сиксе тухать. Çапла вара, виçĕ сăмах çырса епĕр иккĕшĕ йурăхсăррине куратпăр. Ак ĕнтĕ шухăшламасăр çырсан мĕнле пулма пултарать! Виçĕ ана сухалама тытăнтăмăр та, вĕсенҫен иккĕшне пăсрăмăр. Аван сухаçсем пулăпăр апла?

Вçеволот Иванов хăй анисене пĕр ӳркенмесĕр, тăрăшса акрĕ. Вăл ăна ак çапла турĕ: малтан хăйĕн пуçĕнҫе авантарах шухăшласа илҫĕ те: «пойĕс вăрмантан кĕтмен çĕртенех сиксе тухнине йепле меллĕрех калама пулатьха»? Çавăнтах вăл шухăша тĕрĕс каласа кăтартма кирлĕ сăмах та тупрĕ: пăшал пулле к ă л а р с а ы в ă т н ă пекех, пойĕса та, вăрман кăларса ы в ă т р ĕ. Кайран вара вăл хăйĕн пуçĕнҫи шухăшне, вăл куракан карттина çырса хуҫĕ. Çапла вара пит хитре, илемлĕ, пурнăçра пулакан карттинна кăтартса паҫĕ. Йе тата Арисăн «Йӳçсе хăпарать» йатлă калавĕнҫе:

> «Хĕвелтухăç йенҫи пĕлĕт хĕррисем хĕрелсе, кăвак-симĕсленсе, шуралса хĕвел тухасси инçех маррине пит лайăххăн кăтартса тăраççĕ. Шурăмпуç çăлтăрĕ илемленсе килекен çутă, ăшă вĕçĕмсĕр хăватлă хĕ в е л е в ы р ă н т а с а т с а парса, темĕн тĕрлĕ тĕспе йулашки хут ҫалкăшса илсе, пĕлĕтпе çĕр пĕрлешсе тăнă тĕлеллеваскасах ҫупать»...

Çавăнпа ĕнтĕ çакна пирĕн те авантарах астăвас пулать: п у ç р а ç а в ă н п е к к а р т т и н с е м х а т ĕ р л е м е вĕренес пулать

Çапла вара, литтераттурăллă сăмахсене çĕнетме пулать, çав манерпех илемсĕр ҫĕлхене литтераттурăран хăваласа кăларма пулать.

## Меттафăрăпа танлаштарусем.

Мĕншĕн Вçеволот Иванов «хырсем кăларса ывăтрĕç» тетха вăл? Акă мĕншĕн: ҫăнахах вăрмантан пойĕс тухнине пăхса, сăнаса тăрсан, ă н а й ă в ă ç с е м к ă л а р с а ы в ă т н ă п е к е х т у й ă н а т ь. Çав вăхăтра çаплалла шухăш кĕнипе, Иванов та çапла «кăларса ывăтрĕç» тесе çырнă. Çавăн пек пĕр шухăша, йапалана урăхла, урăх сăмахсемпе танлаштарса каланине м е т т а ф ă р ă теççĕ. Епĕр кăтартнă татăкра меттафăрăсем тата та пур: правус куçĕсем (хунарĕсем вырăнне) пĕлĕте кăвакартни (правус тĕтĕмĕ вырăнне). Çак малта кăтартнă сыпăкра хăвăр меттафăрă шыраса тупăрха:

Раççей—сĕтĕрĕнен майра—
Ан пултăр текех кайра. (Хусанкай).

Йе тата:

«Мушиксем кĕнĕçем кĕреççĕ; проневик пĕр ывăнмасăр ђашласа тăрат. Пушаннă, сўне пуçланнă вут куписенђен тухакан тĕтĕмпе çулне çухатнă пек, йериперен йерипен çырма урлă каçнă кĕпер панђен те стрелăђник путки патнелле каллĕ маллĕ çўрет.

(Вçевăлăт Иванов «Пронепойăс»).

«Хуйхă тĕтĕмĕ ман çамрăк пуçа хупласа илђĕ; йе тата: хурал пўрђĕ хăйĕн шывлă куçĕсемпе урамалла пăхса тăрат».

Акă тата ĕçхĕл меттафăра çаврăнни: «Пăђăкă майпе к ă ш л а с а х хулăм пĕренене урлă татрĕ», т. ыт. те.

Йе тата:

«Йал çине такам, курăнман алăпа, шурă-çутă тутăр килсе витрĕ. Çуртсем хура-çутă йăмрасем хыçне пытанђĕç. Шăннă ђўређесем витĕр вăрттăн пĕрер çутă куçпа урамалла йăпшăнса пăхаççĕ. Çўлте уçăлса хупăнакан çăлтăрсем хушшинђе в ĕ с е н к ĕ т ў ç ĕ—уйăх, сарă сухаллăскер, çăлтăрсене шутласа çўрет»...

(Рсай «Уçă хапха»).

«Каçхи тĕттĕм ђўређерен пăхат. Пўрт умĕнђе каç пĕр сасăсăр тăрса, хăйĕн тĕттĕм ђатăрне карат. Ђўређе çинђе кушак аçи питне çуса ларат. Матĕрне карђăк хăтăрат ăна:

— Есĕ тата кама йăхăран ăнман йапала. Прĕсс!

Алăк ла-а-а-ш уçăлса кайрĕ те—алăк айĕнђен шăнкăрав сассисем йантраса карĕç. Куçа хĕрлĕ кĕпе курăнђĕ. Çĕлĕкĕ пўрнине çўлелле тăратса тăрат, çĕлĕкĕ çинђе пилĕк вĕçлĕ çăлтăр. Карђăк хăранипе кĕтесселле тарат:

— Йăхăрса илђĕ мур илешшĕ!

Çĕлĕкне илђĕ хайхи çын—кăшт кăна хăйсен ађи манерлĕ туйăнат.

— Сывăи, анне? (Неверăв «Путсĕр—Антрон»).

Тата меттафăрă пекех сăмаха илемлетекен йапала—танлаштару пур. Танлаштарнинђе пĕр сăмаха урăххипе улăштармаççĕ (паçăрхи пек—хырсем кăларса пăрахрĕç, темеççĕ) унта икĕ сăмаха кăтартаççĕ (хырсем кăларса ыватнă пекех сиксе тухрĕç). Акă çав «Пронепойĕс» йатлă калавра çакăн пек танлаштарусем (сравненисем) пур:

«Йăвăçсем с ă н ă п е к т ў п тўрĕ лараççĕ. «Пĕренесем в и л н ĕ ç ы н ў ђ ĕ с е м п е к в ы р т а ç ç ĕ, вилнĕ çын ўђĕсем—п ĕ р е н е с е м п е к йăванса выртаççĕ: туратсем те, çын аллисем те шăтăртатаççĕ, йăвăçсем те, çынсем те таса, ђăтăмлă ўтлĕ».

«Çынсем, пиçсе çитнĕ пахђа çимĕçсем çилпе ўкнĕ пек, пере-пере анаççĕ». (Вçевăлăт Иванов. «Пронепойăс»).

«Çурхи сивĕ çил văштăртатаť. Типме пуçланă йур шывĕ çырмасенђе, васансенђе т ă р н а к у ç п е к ђăрлтăртатса выртаť».

(Виктăрăв «Йун тăкăннă văхăтра»).

Йе тата:

«Вăрманти икеле тахçанах пуçтарса пĕтернĕ. Пукравĕ те тахçанах иртнĕ. Çынсем йулашки вăрман апатне—шĕшкĕ кăђкине хутаçĕ-хутаçĕпе йăтаççĕ. Вăрманĕнђе çиллĕ тăман вĕçтерет. Йăвăç хушшинђе çил **пĕђĕк ађа пек** улаť». (Ђĕкеç Ç. «Выçлăх çулсем»).

«Йамшăк çунатлă урхамахне ытараймасăр икĕ аллипе те выљаса **вĕçме хатĕрленсе пынă пек** ларса пыраť».

(Йуман «Пурлăх комиссарĕ»).

## Пĕтĕмĕш вырăнне пайĕ.

Калавсем çырнă йапалана хăйне мар, унпа йепле те пулин çыхăннă, йе унăн пайне каласа çырма йураť. Сăмахран, ак çапла калама йураť: «Хĕллехи văхăтра çав йалти хресђенсем корçинккăсем туса сутнă укçапа пурăнаççĕ». Анђах ак çапла каласан, килĕшўллĕрех, илемлĕрех пулаť; «Хĕллехи văхăтра ç а в й а л к о р ç и н к к ă с е м п е тăранса пурăнаť». Çапла вара пирĕн «хресђенсем» вырăнне й а л пулса тăраť, «корçинккăсем туса сутнă укçапа пурăнаççĕ» вырăнне пĕр сăмах кăна «корçинккăсемпе» пулса тăраť. Ахаљ кил-çуртра, йе урамра калаçнă văхăтра та çавăн пек сăмахсем ђас-ђасах тĕл пулаççĕ, калаçакансем хăйсем ăна сисмеççĕ те: «пĕр ђашкă ĕçрĕл», «тикĕтпе, йе ђăптапа пурнатпăр» тата ыттисем те. Кун пек ђух мĕн шухăшланине каласа кăтартмасť, пурнăçра çав йапалапа çыхăннă пайсене анђах калаť. Ђăннипе каласан, йал корçинккăсем çисе пурăнманах ĕнтĕ, корçинккă сутнă укçапа çăкăр илсе пурăннă. Ĕçме те «ђашкă» ĕçейместĕн, ђашкăра ђейе ĕçетĕн.

«Вилкелм ш т ы к ĕ с е м Ревĕлтен пуçласа Пăсковпа Порисcăв урлă Киййĕва çитиђђен тăкăс çтена пек тăнă» т. ыт. те.

## Опретелени.

Тата тепĕр тĕрлĕ сăмахсене пăхса тухарха:

«**Тĕтреллĕ** кун епĕр пиђђепе ирех хулана тухса утрăмăр. Ĕнер çеç кулса, савăнса пĕлĕт тăрăх çўрекен хĕвел таçта тарса пытаннă. **Кăтра** йешĕл вăрман та хĕвел пытаннипе салхуланнă».

«Унăн **виђĕкĕн** хура кусĕсем куç лупашки ăшне кĕрсе кайнă, çапах та вĕсем вут-кăвар пек çунаççĕ».

(Йуман «Пурлăх комиссарĕ»).

«Маттурне те маттур çав хĕрĕ те: пит çăмартисем хĕп хĕрлĕ, йун сиксе тухас пек, **ђакăр** куçĕсем выљаса анђах тăраççĕ, **сарă** çÿçĕсем пилĕк таран, **çÿлĕ** кăкăрĕсем саппунне хăпартса тăраççĕ».

(«Тăлăх Сухви»).

Çак кăтартнă сыпăксенђе епĕр пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарнине курмастпăр. Кунта урăхла тунă: йапала йатне кăтартакан сăмах çумне (вăрман, етем, куçĕсем т. ыт. те) тепĕр сăмах хушнă, çав хушнă сăмах малтанхи сăмаха паллăрах туса лартаť, çапла тунипе вара илемлĕ, килĕшÿллĕ карттин пулса тăраť (имшеркке етем). Пирĕн хаљ мĕнле сăмахсем хушмаллине пĕлес пулаť. Унң пек сăмахсене тупма йепле вĕренес пулаťха пирĕн? Илĕпĕр çак примера:

«**Йешĕл, кăтра çÿçлĕ** вăрманта кайăк-кĕшĕксем савăнса йурлаççĕ».

Кунта мĕнле сăмахсем хушнине авантарах пăхăрха. Сăмахран писсаттĕл малтан «вăрманта» сăмах панă, анђах вăл, вăрмансем çинђен вулакан тĕрлĕрен шухăшламаллине пит аван пĕлет. Вуласа тухсан çакăн пек опрăссем те пуçа килме пултараççĕ: «вăрмансем йур айĕнђе» лараççĕ, тепĕр вăхăтра «вăрман сулхăмĕ» аса килме пултараť, тата ыттисем те, мĕншĕн тесен кусем пурте вăрман çинђен çырни пулаççĕ. Писсаттĕле мĕн кирлĕ пулнине, вăл мĕнле сăмах калас тенине пĕлме çук. Ђăнахах «вăрманта» тесе анђах çырсан, писсаттĕл шухăшне пĕлме çук. Ун шухăшне пĕлмесен, вăл кăтартас тенĕ карттинине те пĕлместпĕр. Çавăнпа писсаттĕл ытти сăмахсем хушаť, çав хушнă сăмахсем (опретеленисем) писсаттĕл хăй çыракан йапалан мĕнле уйрăмлăх пуррине кăтартасшăн пулнине палăртаť. Епĕр илнĕ примерта çыракан вăрман йурпа хупланнине те мар, вăл йешĕл-кăтра курăнса ларнине кăтартасшăн пулнă.

Çавăн пекех ытти сыпăксенђе те, сăмахран—«шăрăх» сăмахах илсе пăхар, ђăнахах та çав «шăрăх» тĕрлĕ пулма пултараť, урăхла каласан, шăрăх вăхăтра пуçа тĕрлĕ шухăш кĕме пултараť: ђуна кантаракан шăрăх, сывлама йăвăр шăрăх, сывлăха тÿрлетекен шăрăх т. ыттисем те. Ытти ђухне «ђуна кантаракан» шăрăх теме те пулаť. Калăпăр, есĕр йĕпе, сивĕ кĕркунне кăнтăрла йенне (Крыма) кайса хĕвел ăшшинђе, хăйăр çинђе йăваланса вырт-

 рăр, унта ђăтма çук, вилмелле шăрăх тийейместĕнех, мĕншĕн тесен килĕртен кайинђен есĕр сивĕпе, çăмăрпа аптраса пĕтрĕр, Крымра вăл вăхăтра хĕвел ăшши кантарсах йарать.

## Сайра сăмахсемпе усă курасси.

Хăвăр происветенисене тата есĕр сайра сăмахсем кĕртсе илемлетме пултараттăр. Мĕнле сăмахсемха вĕсем? Сайра сăмахсем тесе литтереттурăра сайра вăхăтра анђах курăнаканнисене калаççĕ. Вăл сăмах литтераттурăра пурах, анђах унпа çынсен пĕр пайĕ, пĕр ушкăнĕ кайа усă курать, ыттисем ăна асăрхаймасăр та йулма пултараççĕ. Пĕр сăмахпа каласан: литтераттурăра халинђен каламан, йе пит сахал каланă сăмахсем происветенийе çăмăллатса уçса йараççĕ, çав майпа вара вулакан вăл сăмахсене тăнларах вулать. Сире вулакан шухăшларах вулани кирлĕ те.

Анђах сайра сăмахсемпе çыратăп тесе ытлашши, ĕретрен тухса кайас пулмасть, вĕсене кирлĕ вăхăтра анђах кӳртсе хурас пулать. Сайра сăмахсемпе çыратăп, тесе, çырса тултарăн та, кайран вулакан ăнланаймĕ те.

Сăмахран, Çĕпĕрте пурăнакан касаксем ытти вырăссенђен ђылай расна калаçаççĕ, йе Ђăваш респуплĕкĕн тулашĕнђе пурнакан ђăвашсем те уйрăм калаçаççĕ. Вĕсен пурнăçĕ çинђен çырнă ђух вĕсен пирĕншĕн сайра сăмахĕсене вырăнĕ-вырăнĕпе кĕртесех пулать, çапла çырсан калав уйрăмах аван пулма пултарать.

Çапла, ĕнтĕ, сайра сăмахсемпе хăвăн происветенисене илемлетес тесен, ђикĕрен тухса кайас пулмасть, вĕсене йĕркипе пĕлсе кĕртес пулать.

## Кĕске пуплевсемпе çырма тăрăшăр.

Уйрăм сăмахсене пăхса тухнă хыççăн, пуплевсене мĕнле çырассине пăхма тытăнарха. Писсаттĕлсен çырнисене пăхса тухсан епĕр вĕсем кĕске ăнланмалла пуплевсем çырнине куратпăр. Писсаттĕлсем сахал йапала çинђен çырма тăрăшнинђен килмест вăл, çук, вĕсем кĕске пуплевсемпе те нумай йапаласем çинђен çырма пултараççĕ. Сăмахран: 9 йе сăмах вырăнне ик-виç сăмах кăна çырсан та, вĕсем ытти çынсем 10 сăмахпа каланă шухăшран ытларах çыраççĕ, хăнăхман çын 10 сăмахпа та вĕсем 3 сăмахпа каланă шухăша каласа параймасть. Çавăн пек çырма ђас вĕренме пулать. Ху çырнă йапалана темиçе хут вуласа тухса, кашнинђе

ытлашши сӑмахсене хуратса тухас пулаҭ. Пӗр пӑхсан малтан ытлашши сӑмахсем ҫук пек туйӑнаҭ, анђах авантарах тепӗр хут пӑхса тухсан, вӗсем ђылайах тупӑнаҫҫӗ. Мӗнле сӑмахсене ытлашши сӑмахсем теҫҫӗха?

Хӑш претлошенирен виҫ-тӑват сӑмах кӑларса пӑрахатӑн, ҫапах та пуплев ӑнланмалла, калас шухӑш йулатех, ҫав нимӗн те кӑтартман сӑмахсене ытлашши теме пулаҭ. Хӑш ђух вара темиҫе сӑмах вырӑнне пӗр сӑмах кӗртсе хума пулаҭ. Ытлашши сӑмахсене хуратса тухмасан, есӗр ђӗлхӗре аванлатаймӑр: ытлашши сӑмахлӑ вырӑнсем (пуплевсем) ђуллӑ ана пек вӗсем, ҫурри ҫӗр, ҫурри ђул. Унта тырӑ пулманни паллах ӗнтӗ. Ҫавӑн пекех ӗнтӗ, ытлашши сӑмахлӑ происветени те, усӑсӑр ана пек ҫителӗклӗ усӑ парас ҫук.

Сӑмахран, епӗ ак ҫапла ҫырма пуҫларӑм: «Каҫ пулса килет. Ӑҫта ҫитнӗ унта тӗттӗм пулса килнине йерипен сисе пуҫларӑм». Ку лайӑх ҫырни, йе нађар ҫырни пулаҭи? Йураҭ пек туйӑнаҭ. Анђах, ђипертерех пӑхсан, куншӑн мана йатлама та йураҭ. Ҫак претлошенийе тӗплӗрех пӑхса тухсан, епӗ унта ытлашши, кирлӗ мар сӑмахсем пуррине сисетӗп, ҫавӑнпа ӑна урӑхлататӑп: «Каҫпа. Тӗттӗм пусса килет». Ҫитрӗ те. Ђӑнахах та вара, мӗн тума «ӑҫта ҫитнӗ унта, пур ҫӗрте те» тесе ҫырас? Тӗттӗм пулассине такам та пӗлет-ҫке, пирӗн пӳрт умӗнђе тӗттӗм пулсан, кӳршӗ пӳрђӗ умӗнђе кӑнтӑрла пулма пултараймастех. Мӗншӗн тата «йерипен сисе» пуҫларӑм тесе ҫырмаллаха? Тӗттӗм пулни сисӗнмесен, ун ҫинђен ҫырма та тытӑнмалла мар. Ҫак усӑсӑр сӑмахсене епӗ пурне те хуратса тухрӑм. Йулашкинђен тата епӗ: «тӗттӗм пусса килнине» тесе ҫырнӑђђӗ. Анђах ҫав виҫ сӑмах вырӑнне пӗр «тӗттӗмленђӗ» тесе хӑварсан та ӑнланмалла. Ун пек примерсем ђылай тупма пулаҭ. Акӑ пӑхӑр ӗнтӗ, малтан пӗр сӑмах та ытлашши мар пек туйӑнаҭђӗ, кайран авантарах шухӑшласа пӑхса тухрӑмӑр та, тӑхӑр сӑмахран пилӗк сӑмах кӑларса пӑрахмалла пулђӗ. Ҫапла вара: тӑватӑ утӑм малалла, пилӗк хут вырӑнта таптаса тӑтӑмӑр—акӑ мӗнле утӑмпа утаҭ сирӗн сӑмахӑр. Паллах ӗнтӗ, ҫавӑн пек ҫырнӑ происветенисене вулакан кӑшт вуласанах пӑрахаҭ. Тата ҫак сыпӑка илсе пӑхар, кунта есӗр хӑвӑрах авантарах пӑхса тухӑр та, ытлашши сӑмахсене пурне те хуратса тухӑр.

«Салтаксем, васкамасӑр, йерипен, ӳркенкелесе утса, пирӗн шухӑшпа, тӑшмансем выртакан сӑрт патне пыђӗҫ».

Çак претлошенире çуррине йахăн хуратса тухма пулаť.

Ытлашши сăмахсене хуратиђђен пуçне тата урăх майпа та кěскен çырма вěренме пулаť: ăна пуплевсене йапала йађěсěр йе ěçлěхсěр çырса тума пулаť. Анђах ăна та пит пěлсе тăвас пулаť, унсăр пуçне ăнланмалла пулсан анђах çырмасăр хăварас пулаť. Вăл йěркене хресђенсем те пит аван пěлеççě, йурăсенђе, ваттисен сăмахěсенђе çавăн пек пуплевсем пит нумай тупма пулаť. Сăмахран «Хăшě вăрмана, хăшě вутта» тенě пуплевре икě сăмах сиктерсе хăварнă («кайаť» йе «ђупаť»), пěтěмпех калас пулсан, ку çапла пулмалла: «Хăшě вăрмана кайаť, хăшě вутта ђупаť». Анђах мěн тунине кăтартмасăр çырни илемлěрех тухрě, тата ăнланмалла та.

Акă тата епě тепěр пример кăтартам: «Ир. Шăхлиђ. Мěкěрни». Кунта нумай сăмах сиктерсе хăварнă. «Ир пулђě». «Шăхлиђ сасси илтěнет». «Ěнесем мěкěреççě». Акă пăхăрха: «Ирхине пулђě. Çанталăк лăп. Шăхлиђ сасси илтěнђě. Ěнесем мěкěрме тытăнђěç». Епě малтан çырни, ытти сăмахсем хушшине путрě. Кайран хушнă сăмахсем мěншěн ытлашшиха вěсем? Мěншěн тесен вěсем пурри ним илемлěх те памасť. Вěсем мěлле те пулсан урăх илем, йе урăх шухăш кěртес пулсан, вěсене çырсан та йураťђě. Пуплев те пысăкланěђђě, шухăш та пуйанланěђђě. Анђах вěсем халђ ним усă та памаççě.

Акă тата пуплеве тепěр тěрлě кěскетме пулаť: кунта йапала йађě çук, мěн туни пур. «Çитрěмěр. Кěтěмěр. Куртăмăр: хăрарěç пулмалла—куçěсем йăвашшăн пăхаççě». Кам çитнине, кам кěнине, кам курнине, кам хăранине т. ыт. те нимěн те кăтартман. Анђах калавра вăл (камě) паллă, çавăнпа сăмахсем (çитрěç т. ыт. те) усăсăр мар, вулакан вěсене ăнланаť.

## Тěрлěрен сăмахсемпе çырма тăрăшас пулаť.

Пуплевсене кěскен кăна çырма тăрăшни çитмест. Вěсене тата т ě р л ě р е н сăмахсемпе çырма тăрăшмалла, урăхла каласан: пěр ђух пěр тěрлě, тепěр ђух тепěр тěрлě сăмахсемпе пěрле çырма тăрăшас пулаť. Хăйěн калавне автăр йаланах пěр манерлě çырсан вулама пит йăвăр пулаť, вулас килмест.—Йăлăхтараť. Вулакан интересленсе вуламан калав—калав та мар вара вăл. Пуплевсене урăхлатма, тěрлěлетме те пулаť, ун пек майсем нумай. Вěсенђен епěр: ы й т у п а л а ђ ě н н и н е çырассине пăхса тухар.

Калăпăр, епĕ çапла çырнă пултăр.

«Ку тĕлĕнмелле карђăк пулнă. Хăй пурнăçĕ тăрăшшĕпех, иртен пуçласа каçђенех—ĕçре. Акă каç пулђĕ. Ĕçсем пĕтнĕпе пĕрех (тата тиркĕ-ђашкă çумалла кăна йулаť, вĕсене вăл ирхинех çуса тасатса хураť). Вăл çăвăнма та вăхăт тупаť, таса кĕпе тăхăнса йараť те, çак тумтирпе вара каç иртерет. Каçхи апат хыççăн вăл калаçса ларнине пăхсан, вăл кунĕпе ĕçлесе ывăннă пек те туйăнмасť.»

Паллах ĕнтĕ, ку пуплеве урăхла çырас пулаť. Малтан ы й т у майĕпе çырса пăхар. Ку майпа вара вăл пуплев çапла тытăнаť: «Вăл карђăк ирĕкре пурăнаť тесессĕн есĕр ĕненĕрши? Хăй пурăнăç тăрăшшĕпех» тата малалла та. Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, çапла пуçласа йани калава уйрăмах çăмăллатса, илемлетсе йараť. Кунтан маларах ыйту пур пулсан, ку пуплев вађђи ђ ĕ н н ĕ майпа çырма пулаť. Апла çырсан, çакăн пек тухаť вара: «Ырă карђăк. Пурăнатниха есĕ? Ĕлĕкхи пекех ир пуçласа каç-ђеп ĕçлетĕни? Санăн ĕçлĕ кунна хађхи пек курса тăратăп. Каç пула пуçласанах вара»... тата малалла малта кăтартнă пек.

Кунтан пуçне тата урăх майпа аванлатма пулаť: сирĕн проис-ветенире пуплевсем пĕр пек тытăнаççĕ пулсан, йе тата пĕр сă-махах темиçе хут çырнă пулсан, вĕсен вырăнне тĕрлĕ çĕртс тĕрлĕ сăмах (çав шухăша ăнлантаракан сăмахсем) тупса хурас пулаť. Ак çак татăка пăхса тухăрха, унта пĕр тĕрлĕ сăмаха темиçе хут çырнă:

«Çĕрĕç пайĕнђе мĕнле те пулин çĕнĕ саккун тухнине пĕлес тесенех, Петĕр патне кайатăн. Сайавлени çырмалла пулсан татах çавăн патне кайатăн. Хаçат вулас тесессĕн—татах Петĕр патне кайатăн».

Çак пĕр пек каланă сăмахсене улăштарса, тĕрлĕлетсе пăхарха, мĕнле пулĕ.

«Çĕрĕç пайĕнђи çĕнĕ хыпара пĕлес килсен, тӳрех Петĕр патне ђупатăн. Вăхăђĕпе сайавлени çырмалла пулаť, çавăн патнех пы-ратăн. Хаçат вулас тесен, йалĕпе ђупса çаврăнсан та, Петĕрех пуççапмалла пулаť. Ак вăл йепле маттур йĕкĕтђĕ».

**Паллăрах, тĕрĕсрех сăмахсемпе çырас пулаť.**

Калас шухăша илемлĕрех каласа кăтартасси çинђен калаçнă вăхăтра епĕр—çырнă ђух к и р л ĕ, т ĕ р ĕ с, и л е м л ĕ сăмахсем

тупмалла, тенĕђђĕ. Анђах хăш ђух çапла майпа тухнă сăмахсем питех кăмăла каймаççĕ. Пĕри пулсан, çавăнтах сисет те тӳрлетет, тепри вара аллисене усаť, ним тума пĕлмест, аптăра тăраť; вулама тытăнђĕ те (сасăпа вулама тытăнсан) темĕскер килĕшменни сисĕнет. Пуплевсем те тĕрлĕрен çырăннă, опписсанине те аван çырнă, анђах авантарах итлесен, йăнăшши палăрсах тăраť. Темĕскер пулсах çитменĕн туйăнаť. Мĕнтен килет çав йапала? Кăна хирĕç çакна анђах калама пулаť: есĕр хăвăра кирлĕ сăмах шыранă вăхăтра, сирĕн хăлхăр «çывăрса» йулнă пулмалла. Çырма тытăнсан есĕр куççем ваљљи, ђĕре ваљљи илемлĕ карттинккăсем парасшăн пулнă. Анђах çакна манмалла мар: çын пĕр вăхăтрах, пĕр йапаланах темиçе йенђен пырса пăхма пултараť. Сăмахран: çынсем утă çулнине пăхса тăнă вăхăтра, есĕр курăкпа çавана кăна мар, тата курăка çавапа м ĕ н л е çулнине те куратăр. Утă çулнă ђух çын йе аллисемпе, йе пĕтĕм пĕвĕпе сулкаланаť, авăн çапнă вăхăтра, йе лава кĕлте тийенĕ вăхăтра вăл тата урăх майлă авкаланаť. Унтан пуçне тата есĕр çавăнтах курăка çава каснă с а с ă, й е çавана хăйранă сасă илтетĕр, сăмсапа тата—типекен курăк шăршине, хресђенсен т а р ш ă р ш и н е сисме пулаť, т. ыт. те. Çапла вара епĕр ђас-ђасах пурнăçра пĕр йапаланах тĕрлĕ йенђен пăхса, пĕр вăхăтрах т е м и ç е уйрăмне куратпăр, анђах сăмаха авантарах çырас тесе тăрăшнă вăхăтра хăш уйрăмне манса кайатпăр, сиктерсе хăваратпăр. Вăт çавăнпа, куçпа пăхма, йе урăхла каласан, куççем ваљљи сăмах килĕшӳллĕ пулсан, хăлхасем ваљљи килĕшӳсĕр пулаť. Хăш ђухне, йе тата йапала мĕнле хускалнине, авкаланнине тĕрĕссипех кăтартса памасť. Çавăнпа ĕнтĕ епĕр çырни пур йенђен те (куççемшĕн те, хăлхасемшĕн те) килĕшӳллĕ пулмалла.

### Сасђĕвве, çутта, шăрша сăмахпа йепле каласа пама пулаť?

Кунта епĕр сасăсене сăмахпа йепле кăтартса памалли çинђен калаçăпăр. Акă епĕ калавра, йе ођђĕркра хамăн йе манăн керойсем тăракан вырăна тăшмансем т у п ă п а пенине каласа парасшăн. Çыратăп: «Çав вăхăтрах сасартăк пиртен пĕрик çухрăмра тăракан тăшмансем йенђен т у п ă с а с с и илтĕнђĕ. Çакăн хыççăн йал çийĕнђе снарет вĕçнĕ сасă илтĕнђĕ. Пăртак вăхăт иртсенех вăл йал тулашĕнђе сасăпа çурăлђĕ те, ун ç у т т и п е йăвăççем те çутăлса кайрĕç». Çак пуплеве çĕнĕрен сăнаса вуласа тухатăп.

Кашни сăмаха танлаштарса пăхса, хам шухăша пурнăçра куракан йапаласемпе танлаштарса пăхатăп. Куçсемпе курни манăça ан тухтăр, вулакан ăна авантарах астутăр тесе, епĕ ăна урăхлататăп. Манăн хайхи çапла пулса тăраť: «Инçетре кĕскен кăна, тупă сасси илтĕнђĕ. Çӳлте пуç урлă хăрушă сасăпала снарет вĕçсе кайрĕ, çавăн хыççăн каçхи тĕттĕмре çулăмĕпе йăвăççене çутатса, снарет вăрман патĕнђе çурăлђĕ. Ун сасси вăрмана саланђĕ те çухалђĕ». Кунта мĕн турăм епĕ? Ђи малтан епĕ ытлашши сăмахсене хуратрăм. Унтан вара хам куçсемпе курнине вулакана манмалла мар кăтартас тесе, вырăнлă сăмах тупса хутăм.

| **Малтан çаплађђĕ.** | **Х а л ĕ.** |
|---|---|
| „Ун çуттипе йăвăçсем те çуталса кайрĕç". | „Çулăмĕпе йăвăççене çутатса снарет çурăлђĕ. |

Кун хыççăн т е п ĕ р х у т тӳрлетсе тухатăп, халĕ ĕнтĕ куçпа курнине мар, х ă л х а п а и л т н и н е каласа пама пултаратăп. Снарет сассине кăтартакан сăмах тупас пулаť. Акă манăн мĕнле пулса тăђĕ: «Кĕскен кăна инçетре тупă к ĕ р ĕ с л е т с е илђĕ. Х ă р у ш ш ă н в ă ш ă л т а т с а пуç çинђен снарет вĕçсе кайрĕ. Инçетре, йал хыçĕнђе, йăвăççене пырса перĕннипе, снаретре каçхи тĕттĕме çутатса çулăм катăлса тухрĕ те, пĕтĕм таврана ђ ĕ т р е т с е кĕрĕслетсе çурăлђĕ, ун сасси кайран хыр вăрманне саланђĕ».

Халђ ĕнтĕ пирвайхипе танлаштарса пăхăр.

| **Малтан çаплађђĕ.** | **Тӳрлетсен.** |
|---|---|
| „Вĕçнĕ сасă", „вăрман хыçĕнђе çурăлђĕ", „сасăпа çурăлђĕ", | „хăрушшăн вăталатса вĕçсе, йăвăççене хытă пырса перĕннипе", **„кĕрĕслетсе** çурăлђĕ". |

Кусене куçпа курнине мар, хăлхапа илтнине систересшĕн тунине такам та кураť. «Вăшлатса» тенĕ сăмах снарет сассине систерет. Мĕншĕн тесен снарет сассинђен пуçне тата урăх сасăсем те пулма пултараççĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, çырнă ђух к а ш н и саспаллипе мĕнле те пулин сасă илтĕннине кăтартса пама тăрăшмалла. Урăх сасăсем çырнă вăхăтра епĕ урăхла сăмахсем тупатăп. Çапла вара пурнăçра илтĕнекен сасăсене кашни саспаллипех кăтартса пама тăрăшмалла.

## Сăмах йухăмĕ йе сăмах ритми.

Вырăнлă сăмахпа ĕç йухăмне те кăтартма пулаť: вăл йе хăвăрт, йе васкамасăр пынине, йе тата ĕçĕн йĕркине кăтартма пулаť. Çавна кăтартса çырнине йухăм ритми теççĕ. Виççĕмĕш хут тӳрлетнĕ хыççăн епĕ пaçăрхи примерпа вăл тĕлĕшрен кăшт кăтартса патăм.

| Малтан. | Кайран. |
|---|---|
| „сасăпа" | „кĕрĕслетсе" |
| „сасă ђарăнђĕ". | „сасă вăрмана саланђĕ". |

Мĕн тума çав сăмахсене тупса хутăмха епĕ? Вĕсене епĕ снарет хытă вĕçнине кăтартасшăн тупса хутăм. Йапала сассине йепле системе пулаť, уншăн çав сăмах çине утарени куçарас пулаť.

Ритма палăртас тĕлĕшпе пуплевсене хăйне манер туса та нумай усă курма пулаť. Кирлĕ вăхăтра, йе вăрăмрах сăмах, йе кĕскерех сăмах тупса хума кирлĕ. Унтан вара тата хытă калаттарас тесен, утаренийе çав сăмах, йе слок çине куçармалла.

Акă Неверăвăн[1]) «Ташкент хули—тулăх хула» йатлă повĕçрен пĕр сыпăк илсе пăхар. Унта выçлăх вăхăтĕнђе йалтан Ташкент хулине Мишкă йатлă ађа кайни çинђен каласа кăтартаť автăр. Укçасăр, вăрттăн пыраť вăл, вакунран хăваласа кăлараççĕ ăна. Кайарахпа, май килнĕ ђух, вăл вакун ăшне кĕрсе вырнаçаť. Пыраť. Пит савăннă. Хăйне хăй ăшĕнђе мухтаť. Йепле пулсан та пултараť. Пиçиххи çумне çыхнă пĕђĕк çĕççине (унăн мĕн пур пурлăхĕ те çав анђах) пит сыхлаť. Пойăс йе хытă йе йерипен пыраť. Автăр çакна кĕскен кăна илемлĕ каласа кăтартаť. Йепле калаť вăл? Мишкă çывăрнă пекех пыраť, унăн шухăшĕсем пăйăс мусăкĕпе пĕр тан пыраççĕ: епĕр вуласанах унăн шухăшне те, пойăс йепле пынине те çав сăмахсене вуласанах сисетпĕр.

Акă çав стсенă:

— Пы—ра—тăп, пыраť- -пĕрре.  
Пит меллĕ, меллĕ—иккĕ.  
Çапла, çапла, çапла, çапла, çапла, çапла.  
Маттур, пит маттур, пит маттур!  
Есĕ çитĕн, есĕ çитĕн...  
Ан хăра, ан хăра  
Çĕçĕ—пиçиххи, çĕçĕ—пиçиххи.  
Пăт, пăт, пăт!!!

[1]) Ђăваш шкулĕсенђе 5—6-мĕш çул вуламалли хрестоматтин 31-мĕш стр-ђе.

Хăш вăхăтра пойăс хăвăртрах, хăш вăхăтра вăл йерипентерех кайнине хăвăр сăнаса пăхăрха, тата мĕнле уйрăмсем пур унта? Ђи пирвай сăмах в ă р а м ĕ ш ĕ н ђ е, иккĕмĕшĕ—у т а р е н и в ы р ă н ĕ н ђ е.

Сасăсемпе йухăмсенђен пуçне, сăмах сассисемпе есĕр тата опписсанийе илемлетнĕ çĕрте усă курма пултаратăр. Вăл тĕлĕшрен сăмахсемпе пуплевсене хăвăр шухăшăрпа майлаштарма пултаратăр. Сăмахран: есĕр ăçта та пулин шăп тăнине кăтартса парасшăн. Вăл тĕлĕшрен ђылай сăмах тупма пулаť: «сас ђĕвĕ çук», «кĕмсĕртетни илтĕнмест» т. ыт. те. Анђах вĕсенђен ђи кирлине суйласа илес пулаť. Сăмахран: «кĕмсĕртетни илтĕнмест» сăмахра саспаллисем хăйсемех х ы т т ă н илтĕнеççĕ. Йе тата васкамасăр пыракан йапалана кăтартас тесен «йерипен» тенĕ сăмах килĕшŭллĕрех пулаť, мĕншĕн тесен ăна хăйне те й е р и п е н кăна калама май пур.

Пуплевсене пĕтĕмĕшпе çырас çĕрте çакна астăвас пулаť: хăшĕ вăрăм пуплевсемпе çырма йуратаť, хăшĕ кĕске пуплевсемпе çыраť, анђах кирек камăн та хăш ђух, йе вăрăм, йе кĕске пуплевсемпе çырмалла пулаť, хăш ђух, йе кĕскететĕн, йе вăрăмлататăн. Кусем йухăма палăртма кирлĕ пулаççĕ. Хăш ђух хăш-пĕр çыннăн çапла та пулма пултараť: хăй вăл, шух ађа хăрах урипе шуйттан пек сиккеленнине çырса кăтартасшăн, хăй сăмахĕсене илемсĕр тăсаť; йерипен пыракан ĕçе, йапалана кăтартас çĕрте кĕске, хăвăрт сăмахсемпе çырса хураť.

Çак примерсене йурийех пăхса тухăрха. Мĕншĕн хăш тĕлте сăмахсене хăвăрт, хăш тĕлте йерипентерех вуламалла çырнă? «Путсĕр Антрон» йатлă калавĕнђе Неверăв çапла çыраť:

> «Лараť Антрон исполкомра—приккас хыççăн приккас. Еçтăвкома пĕтĕмпех хутпа çыпăçтарса пĕтерђĕ. Туртма йурамасť, сурма йурамасť, усал сăмах калама йурамасť. Çĕр саккунĕ, протоводствн саккунĕ, хĕрарăмсен ĕçĕпе саккун. Кушналок, протпалок, кĕппротком, райпротком».

Астăварха, кунта п у п л е в с е н е к ĕ с к е т н и п е с ă м а х с е м ç ă м ă л а н н ă ç е м ç ă м ă л л а н с а п ы р а ç ç ĕ. Çавна та астăвас пулаť тата, вĕсем пит кĕскен, калама ç ă м ă л у т а р е н и с е н е п у р н е т е к а й а л а р т н ă. Урăхла çырас тесен çапла çырма пулађђĕ: йурамасť намăс сăмах калаçма, йурамасť урайне сурма, тата малалла та. Неверăв апла çырмасť, вăл йурамасť сăмаха кайа хăвараť: «туртма й у р а м а с ť, сурма й у р а м а с ť» т. ыт. те.

«Тивĕççĕр ĕç тăвакансем» йатлă калавĕнђе Л. Сейфуллина çапла çырат̆:

> «Хурăнсем сарăлђĕç. Хыр вăрманĕ тĕттĕмленђĕ, тĕксĕмленђĕ. Пĕлĕт тутине тăсрĕ (ўпкелерĕ), çиллипе макăрса витререн çăмăр тăкрĕ. Кўлĕ кăвакарми пулђĕ».

«Хурăнсем сарăлђĕç. Хыр вăрманĕ тĕттĕмленђĕ, тĕксĕмленђĕ. Пĕлĕт тутине тăсрĕ (ўпкелерĕ), çиллипе макăрса витререн çумăр тăкрĕ. Кўлĕ кăвакарми пулђĕ».

Ђас-ђасах писсаттĕл хăй вăрăм пуплевсене çырма вĕреннĕ пулсан та, кирлĕ вăхăтра хăй сăмахĕсене хăвăрт вуламалла тăват̆. Акă сăмахран çакна вуласа пăхарха: вăл кунта миттĕнк çинђен çырат̆:

«Шăнкăрав сасси илтĕнсенех çынсем шăп пулђĕç». Кунта вăл пит кĕске сăмахсемпе çырат̆, тата утаренисене те кайа хăварса лартат̆.

### Сăмахсене илемлĕ илтĕнмелле тăвасси.

Сăмахсене йепле çырмалли çинђен малта калани—опрăссене, карттинккăсене, йухăмсене палăртас тĕлĕшпе вĕренме пулăшат̆. Анђах кунсăр пуçне, тата кашни сăмах сасси, йе итлеме аван, йе аван пулма пултарат̆. Çавăнпа аван çырма вĕренес тесен, сăмахсемпе пуплевсен йантравне те хисепех хурса çырас пулат̆. Ку сăвăсем çырнă ђух питех те кирлĕ пулат̆. Акă пример: Сана хăш пушта йарса памалла çыруна? Тепĕр вулăсĕнђи хресђенсем урăхла калаççĕ: вĕсен калани йурланă пек тухат̆: «Есĕ панă çырăва хăш кантура йарасши?»

Мĕншĕн апла калаççĕ вĕсем? Акă мĕншĕн: Калас сăмаха урăхларах, илемлĕрех каласан, вăл ђас манăçа тухмаст̆. Çаплах ĕнтĕ литтераттурă ђĕлхинђе те.

## ПЙЕССĂ ÇЫРАССИ.

Халĕ кунта епĕр пйессăсене йепле майпа çырмалли çинђен калаçасшăн. Трамăсене кометисене йепле çырмалла? Пĕтĕмĕшпе пăхсан, пйессăсенђи тĕп пайĕсем те калавсенђи пекех. Калаври пекех ĕçе пуçласа йани—пуçламĕшĕ пур, унтан ĕççем ўссе, çыхăнса пыни те пур, пйессă вăйлăланнăçем вăйлăланса, кĕрешў ўснĕçемĕн ўссе пырат̆, йулашкинђен расвйаскăпа пĕтет, урăхла каласан, пйессăн йулашки стсени хыççăн

куракансем урӑх мӗн те пулин пуласса кӗтмеççӗ. Сӑмахран, йулашки пайӗнђе, йе керой вилнипе, йе ун пурнӑçӗ паллах улшӑнса кайнине кӑтартаççӗ т. ыт. те.

Анђах пйесса вулакансем ваљђи мар, куракансем ваљђи çыраççӗ, урӑхла каласан, пйессӑра мӗн пулнине стсенӑ çинђе выђакансем пйессӑри сӑмахсем тӑрӑх выђаса кӑтартаççӗ. Çавӑнпа пйессӑн калавран уйрӑмӗсем те пур, пйессӑ çырнӑ ђух вӗсене лайӑх астӑвас пулаť. Ђи малтан ак çакна астӑвас пулаť: килçуртра мӗн пурри, пйессӑри çынсен сӑнӗ-сӑпађӗ, тата ыттисем те куракансене пӑхакансене курӑнса тӑраççӗ. Çавӑнпа пйессӑра калаври пек о п п и с с а н и с е м пулмаççӗ. *Ун* вырӑнне кӗскен кӑна çаксене астутарса хӑварма пулаť (ӑна р е м а р к к ӑ теççӗ): стсенӑра мӗн пулмаллине, хӑш те пӗр керойӑн сӑнне-питне, ун тумланмалли тумне. Пйесса лартакансем вара хӑйсемех, курма пыракансене авантарах, илемлӗрех кӑтартас тесен, вӗсене автӑр кӑтартнӑ пек туса кӑтартма пултараççӗ.

Пйессӑра опписсанисем пулма пултармаççӗ терӗмӗр, унта çынсем пӗр-пӗринпе калаçнине анђах кӑтартса параççӗ (ӑна т и а л ӑ к теççӗ). Çапах та керойсем автӑр калас шухӑшсене пурне те каласа памалла, вӗсем сӑмахсене каланипе кӑна мар, тата калаçакан çын мӗнле калаçмаллине те кӑтартса памалла. Çавӑнпа пйессӑсене çырасси пит йавӑр ӗç вӑл.

Кам та пулсан Шерпетӗн «Ђӗмере Кӗркури» йатлӑ пйессинђен калава çавӑрас тесен, вӑл çыннӑн пйессӑн пуçламӑшне çапла тумалла тухаť:

1) Ђӑваш пӳрђӗ. Алӑкран кӗрсен сылтӑм йенђе кӑмака. Ун çумӗнђе арђа лараť. Ирхине. Кӗçтук апат пӗçерет. Миťук çывӑраť. Праски амӑшне пулӑшаť.

— Праски, витрере шыв пӗтнӗ, шыва кайса килха, тет Кӗçтук, витрене пӑхса Праскийе т. мал. та.

Пйессӑра çаксене урӑх майпа кӑтартаççӗ. Опписсани çырас вырӑнне Шерпет кӗскен кӑна, пӗрик сӑмахпа çырса илемлӗ кӑтартаť (ремарккӑ).

Стсенӑ мӗнле пулмаллине каласа кӑтартсан малалла вара калаçу кайаť, вӗсем калаçнӑ вӑхӑтра Шерпет пйессӑри çынсен хараткӑтӗрне, вӗсен сӑнне-питне кӑтартаť.

Ахаљ калаçнӑ ђухне çакӑн пек асӑрхамаллисем çырмалла пулнӑ пулӗђђӗ:

— Кĕвенте ăçта тата?—тесе ыйтать Праски амăшĕнђен.

— Тулта çуки?—тесе йерипен хирĕç тавăрса калать Кĕçтук.

— Çук çав унта—тесе йĕри тавра пăхкалать Праски.

Пйессăра ун пек асăрхамаллисем кирлĕ мар. Стсенă ваљљи çыраканни вăл сăмахсене кам каланине анђах кăтартса парать:

Праски: Кĕвенте ăçта тата?

Кĕçтук: Тулта çуки?

Праски: Çук çав унта т. мал. та.

Пйесса пĕтĕмпех çапла çыраççĕ. Пйессăри çынсен характĕрĕсем, вĕсем пĕр-пĕринпе йепле пуранни, урăхла каласан, пйессăн сотершанийĕ—калаçнă сăмахсенђен палăрать. Анђах пйессăра керойсем пĕр-пĕринпе калаçни çитмест, унта тата кĕрешӳ те çителĕклĕ пулмалла. Пйессăра калаçнă сăмахсем кăна пулсан, унта кĕрешӳ пулмасан, вăл пйессă та мар вара, пйесса çапла çыракан пит нађар трамат турк (пйессă çыракансене траматтурк теççĕ) пулать.

Пйессăра ытлашши, вырăнсăр сăмахсем, калавсем пулмалла мар. Выљакансем стсенă çинђе ытлашши сăмахласан, вĕсем курма пыракансене ăйха анђах йараççĕ. Пйессăра ахаљ калаçни сахал пулсан, унта кĕрешӳ, тĕрлĕрен ĕçсем ытларах пулсан—куракансене кăтартса пар—куракансем сиккелемесĕр итлесе ларĕç вара. Малалла тата: хăш вăхăтра пйессăра вырăнĕ-вырăнĕпе калавсем пулаççĕ пулсан та, унта пĕр ытлашши сăмах та пулмалла мар. Пйессăра пирвайхи саккун: сăмахсем сахал пулђђăр, тейçтвисем (ĕçсем), кĕрешӳсем çителĕклĕ пулђђăр.

Стсенăри сăмахсем вĕсем, икĕ çын пĕрлешнĕ вăхăтра аллисемпе çапкаланни. Ђăнахах пурнăçра çынсем, тавлашнă ђухне, йе тата ахаљ калаçнă ђухне, пĕр-пĕринпе сăмахсемпе кĕрешеççĕ. Кашни хăй майне тепĕрне çавăрасшăн, ăна каласа ăнлантарасшăн.

Стсенăра сăмахсем тата çивђĕ, виђкĕн пулмалла. Пйессăра нађар сăмахсем пулмалла мар. Унта пĕр-пĕринпе кĕрешекен сăмахсем, çапнине хирĕç тавăрса çапакан сăмахсем анђах пулмалла. Пйессăра кĕрешӳ ђи пысăк вырăн, ђи малти вырăн йышăнса тăмалла, куракансене кĕрешӳ анђах çĕклентерсе йама пултарать. Çĕнĕ итейăсем кив йăласемпе кĕрешни, çĕнĕ ăнлавсем кивĕ ăнлавсемпе кĕрешни, ăслăлăх ăнланăвĕ—пупсен ултавĕпе, ђухăнсем—кулаксемпе, улпутсемпе, ĕçле-

кенсем—кăпиталиссемпе кĕрешни, т. ыт. те—çаксем пурте пирĕн пурнăçра пулаççĕ. Кирек кам та пурнăçра кампа та пулин, мĕншĕн те пулин кĕрешет. Ку тĕлĕшрен стсенă та пурнăçран кайа йулмалла мар. Пйессăра мĕнпе те пулсан, кампа та пулсан кĕрешни пулмалла, çак стсенăн тĕп саккунĕ. Кĕрешӳсĕр çырнă пйессăсем, пурнăça, пурнăçра пулакан кĕрешӳве кăтартса парайман пйессăсем, керойсем хăйсем шухăшланине, вĕсен ăшĕнђи кĕрешӳне, тĕрлĕ сăмахсемпе, опписсанисемпе анђах каласа кăтартакан пйессăсем, йе тата таçта стсенă хыçĕнђе пулнă кĕрешӳсем çинђен тăстарса калаçтарса лартакан пйессăсем—п и т н а ђ а р п й е с с ă с е м в а р а в ĕ с е м.

Пйессăри çынсен кашнин сăмахĕсем кĕске пулмалла, çав вăхăтрах тата вĕсем хĕрӳллĕ, çивђĕ пулмалла.

Керойăн характĕрĕпе унăн тĕп шухăшне, калаври пекех, майĕпе кăтартса пырас пулаť, йе урăхла каласан, май килнĕ вăхăтра кăна палăртса хăварас пулаť.

Хăвăр пйессăри керой мĕнле çын иккенне кăтартас тесе, есĕр, ăна кăтартса парас вырăнне, ун иртнĕ пурнăçĕ çинђен вăрăм калав кĕртсе хурсан, пйессă пăсăлса ларма пултараť, вăл интереслă пулмасť. Çавăнпа ун пек уйрăм стсенăсенђен хăтăлма тăрăшас пулаť. Кашни керой хăй мĕнле çын иккенне выђаса кăтартса патăр, çапла çырнă пйессă аван пулаť.

Пйессăра мĕн пулнине, унта мĕн тĕлĕшрен кĕрешӳ пынине пур керойсен те аван пĕлсе тăмалла, вĕсем те кĕрешӳре пулмалла. Пйессăра ытлашши, вырăнсăр çынсем пулмалла мар. Вĕсенђен кашнин хăйех хăй характĕрне, вăл мĕншĕн тăрăшнине, кампа кĕрешнине стсенăра кăтартса памалла.

Пйессă майĕпе керойсем стсенă çине тухни те вырăнлă, килĕшӳллĕ пулмалла, кĕтмен çĕртен тухнă пек пулмалла мар. Çавăнпа тĕп керойсене пит суйласа илес пулаť, стсенăра мĕн пулнине вĕсем çийелтен анђах пăхмалла мар, ђĕререн сиссе тăмалла. Мĕнле те пулсан пйессăри çын стсенă çине тухмалла пулсан, вăл ахалех тухмалла мар, ĕçпе тухмалла тумалла. Ним ĕçсĕрех стсенă çине пĕр ушкăн çын тухса тăрсан, килĕшӳллĕ пулмасси паллах. Çавăнпа вĕсем стсенă çинђе кирлĕ пулсан анђах, вĕсене кăлармалла тăвас пулаť.

Пйессăн пайĕсене мĕнле йĕркепе çырмаллине кăтартас тесен, çакна каламалла пулаť: пйесса тейçтвисене уйăраççĕ, урăхла кала-

сан, пйессăн пайĕсем пулаççĕ, çак пайсем улшăнса пынă вăхăтра (стсенăна урăхлатма, теккоратсисене куçарма т. ыт. те) а н т р а к т тăваççĕ.

Йалти стсенăсем валђи кĕскерех пйессăсем çырма тăрăшас пулаť: йе пĕр тейçтвиллĕ, йе иккĕллĕ, виçĕ тейçтвиллĕ пйессă ђи пысăкки пулаť вара, унтан ытла пулмалла мар. Тăваттă-пиллĕк тейçтиллĕ пйессăсем курма пыракан хресђенсене ывăнтараççĕ, кайранхи тейçтвисене пăхас килми пулаť.

Кашни тейçтвире тĕрлĕ курăнусем (йавленисем) пулаççĕ: стсенă çине çĕнĕ керой пырса кĕрсенех, вăл вара çĕнĕ курăну пулаť, выђама çăмăлтарах пултăр тесен, пйессă çырнă ђух çав курăнусене те кăтартса пырас пулаť. Сăмахран: виççĕмĕш курăну. «Çавсемех. Тата Петров кĕрет». Малалла вара тиалăк пуçланса кайаť, керойсем пĕр-пĕрипне калаçма тытăнаççĕ.

Кашни тейçтви тĕрлĕ вырăнта пулса иртме пултараť. Сăмахран: пирвайхи—килте, иккĕмĕшĕ—йалсовет умĕнђе, урамра т. ыт. çĕртс. Анђах пĕр тейçтвирех теккоратси улăштарсан аванах пулмасť вара, мĕншĕн тесен теккоратси урăхлатас тесен, стсенăра выђама ђарас пулаť, перерывсене ђас-ђас тусан, пйессă пăсăлма пултараť, куракансем пĕтĕмпех ăнланса илме пултараймаççĕ. Пйессă çырма ларсанах, çакна манас пулмасť: с т с е н ă ç и н ђ и п у л а с й а п а л а с е м, у н т а м ĕ н л е в ы ђ а с с и п у р т е с а н п у ç ă н т а п а л л ă п у л с а т ă м а л л а.

Пйессăра кĕрешӳ пулмалла, терĕмĕр, анђах кĕрешӳ пулсан та, вăл пĕр вырăнта тăмалла мар, в ă л в ă й л ă л а н н ă ç е м в ă й л ă л а н с а, ӳ с н ĕ ç е м ӳ с с е п ы м а л л а, ç а п л а к ĕ р е ш ӳ в е ӳ с т е р с е, х ă п а р т с а п ы р с а, к а й р а н в а р а с т с е н ă ç и н ђ е к е р о й с е м х у ш ш и н ђ е хăрушă ĕçсем тухма пултараççĕ. Сăмахран икĕ йулташ йулашкинђен килĕшейми вăрçса кайма пултараççĕ, пĕр-пĕрне вĕлерме пултараççĕ, тата ытти те, к у н т а п й е с с ă п ĕ т е т в а р а. Ç а п л а, ĕ н т ĕ, п й е с с ă р а к ĕ р е ш ӳ ӳ с н ĕ ç е м ӳ с с е п ы м а л л а. Пйессă куракансене тарăн шухăша йамалла пултăр. Пйессă мĕнпе пĕтесси малтанхи тейçтвисенђех паллă пулмалла мар, куракан пйессă мĕнпе пĕтессине пĕлместха, вăл тилмĕрсе итлесе, сиктермесĕр пăхса лараť, вăл пйессă мĕнпе пĕтнине вĕçĕнђе (расвйаскăра) тин кураť. Малтанхи тейçтви тытăнсанах, куракансем пйессă мĕнпе пĕтессине пĕлсен аванах мар вара. Пйессă куракансене итлеме те, курма та аван, интереслă

пултăр тесен, тейçтвисенђе те кĕтмен çĕртен пулакан йапаласене шухăшласа кăлармалла, ун пек курăнусем, кĕтмен çĕртен сиксе тухнă йапаласем, пйесса тата интереслеççĕ, куракансем вара пйессă йепле пĕтессине сасартăках ђухласа илеймеççĕ, мĕнле пĕтесси çинђен шухăшлаççĕ. Пйессăри кашни тейçтви йулашкинђе вăйлă стсенăпа, асра йулакан стсенăпа пĕтмелле тусан аван пулаť.

Паллах ĕнтĕ, ђи вăйлă, асра йулакан стсенă пйессăн йулашки пайĕнђе расвйаскăра пулмалла. Йалта лартмалли пйессăн сотершанийĕсене илсе пăхсан, вĕсем ђи малтан пурнăçри йапалана тĕрĕс кăтартса памалла, вăл хресђенсене ĕненмелле пултăр, вăл хресђенсене усă кўмелле пултăр, хресђен пйесса пăхнă хыççăн мĕне те пулсан вĕрентĕр. Пйессă унăн куçĕсене уçса, пурнăçри тĕттĕм, йе тата çутă пайĕсене кăтартса, ăна çул уçса патăр. Мĕншĕн те пулсан акиттатсилекен пйессă пулсан та, ун пек пйессăсене хурлама çук, вĕсем те пит кирлĕ. Анђах акиттатси вырăнлă пулмалла, сăмахпа каласа кăна мар, пйессăна курнă хыççăн авттăр шухăшĕ хăйех куракансен пуçне пырса кĕтĕр, урăхла каласан, автăр пйессăра майĕпе, йепле пурăнсан аван пулассине кăтартса патăр.

Пйессă тĕрĕс пулмалли çинђен калаçнă майĕпе çакна каламасăр хăварас мар, терĕмĕр. Халĕ те, ĕлĕкхи пекех, хăш пĕр траматтурксем пйессăра моноляксем çын хăй пĕђђен калаçнисем, кĕртсе хураççĕ. Ăна такçанах пăрахма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, мĕншĕн тесен ăсран тайăлман çын нихăçан та хăйпеле пĕђђен калаçмасť, çавăнпа ăна стсенăран та такçанах кăларса пăрахмалла.

Театтăр çинђен çырнă хресђенсен çырăвĕсене пăхса тухсан, хресђенсем ытти трамăллă происветенисенђен, пуринђен ытла кометисем ыйтни палăраť. Комети тесе кулăшлă пйессăсене калаççĕ. Кометире те, пурăнăçри пекех, кĕрешў пыраť, анђах кометири керой ђăн керой пулмасť, пит нађар йапала, кулăшлă çын, унăн интересĕсем ниме те йурăхсăр, кĕрешме те вăл усал майсемпе, йе кулăшлă майсемпе кĕрешет. Кĕрешессе те, тата çук, кирлĕ мар йапалашăн кĕрешет. Трамăра пысăк шухăшсем, вăйлă кĕрешўсем пулаççĕ. Комети вăл—çынсен йурăхсăр ĕçĕсене, шухăшĕсене стсенă çинђе кăтартса, çынсене çав йурăхсăр çынтан, йăларан култараť. Çакăнта ĕнтĕ унăн трамăран уйрăмĕ.

Формă тĕлĕшĕнђен комети малта кăтартнă правĕлăсенђен уйрăмах тăмасť, трамăри пекех унта та тейçтвийĕсем интереслă, пулмалла кĕрешӳ кирлĕ. Кĕрешӳ ӳссе вăйланса пыни, тейçтвисем вăйлă пĕтни, тата пйессă хăй те вăйлă пĕтни, расвйаски килĕшӳллĕ пулни, тĕрĕслĕхĕ, куракансене усă кӳресси—çаксем пурте кометире те пулмалла.

## СĂВĂСЕМ ÇЫРАССИ.

Кунта епĕр сăвăсене йепле çырмалли çинђен кĕскен кăна каласшăн. Сăвăсене çырмалли ђĕлхе пирĕншĕн çĕнĕ йапала мар. Сăмахсене суйласа çырасси çинђен, пуплевсене йепле майпа пухсан аван, илемлĕ пуласси çинђен, тата сас-ђĕвве йепле кăтартса, систерсе парасси çинђен епĕр малта, калава çырасси тĕлĕшпе каланă ђухне, çителĕклĕ акласа панăђђĕ, çав правĕлăсене, çав йĕркесене сăвăсем çырнă ђух та манас пулмасť. Çавăнпа кунта епĕр сăвăсене йепле майпа çырасси çинђен кăна калас тетпĕр, урăхла каласан, асра тăракан шухăша (темăна) йепле çырсан хитререх, авантарах пулассипе паллаштарасшăн.

Калав çырас йĕркепе паллашнă хыççăн есĕр сăвăсене йепле çырассине те ђас уйласа илĕр.

Кашни сăвă **висĕ пайа** уйрăлаť. Малтанхи пĕр-ик йĕркеллĕ пайĕнђе **темă** çинђен систерсе хуратăр, вулакан вара çак малтанхи йĕркесенђен есĕр мĕн çинђен çырассине туйса илет.

Сăввăн и к к ĕ м ĕ ш пайĕ вăл—ђи пысăк пайĕ пулаť, унта автăр мĕн пур шухăшне, хăйĕн темине тĕрлĕ карттинсемпе, малтан систернĕ шухăша çителĕклĕ таран кăтартса параť. В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ—пит пĕђĕк пай (пĕр йĕркерен пуçласа тăватă йĕркене çитме пултараť)—сăввăн йулашки пайĕ—с а к љ у ђ ђ е н и—унта çыракан йе кĕскен кăна уйрăм шухăш, йе меллĕрех карттин кăтартса параť. Анђах уйрăм шухăш пулсан та, йе тата уйрăм карттинă пулсан та, вĕсем малта кăтартнă шухăшпа çыхăнуллă пулмалла, çав малта кĕскен кăтартнă шухăша тата çирĕпрех вăйлăрах кăтартса памалла. Урăхла каласан, вăл йулашки сăмах пулса тăраť. Çаксене авантарах ăнланас тесен, çак примерсене пăхса ăнласа тухарха: ђăвашсен Курак хушаматлă ватă поетăн «Комуниса» йатлă сăввине вуласа пăхар. Акă вăл:

Çутă пурнăçшăн
Вăйна хунăшăн,
Çутта кайнăшăн
Йулташăм, телей.

Ку сăввăн малтанхи пайĕ пулаť. Унта курак сăввин тĕп шухăшне „Çутă пурнăçшăн вăйна хунăшăн, çутта кайнăшăн, йулташăм, телей“ тет.

Ушкăна кĕрсе
Ĕçлеме тухрăн.
Ђеђек пек шăтаť
Пур вăйна хурса —
Есĕ тăрăшрăн.
Пулăшу сана,
Çўле хăпараť
Çеçкене лараť.

Ку—иккĕмĕш пайĕ, çак пайĕнђе вара авттăр хăй темине кирлĕ таран каласа кăтартаť, урăхла каласан, малтанхи пайри шухăша малалла тăсаť. Пирвайхи пайĕнђе вăл комунис çĕнĕ пурнăç тунине кăтартнипе систерсе анђах хуђĕ, малала вара ăна вăл мĕнле тукине çителĕклĕ таран кăтартса параť.

Вĕсене курса
Вĕçессĕм килет,
Ыр шăрша пухса
Сывлассăм килет.
Пур тĕнђе пăхаť
Йусавлă куçпа,
Пур çынна йыхраť
Савăнăç курма.
Çутă пурнăçшăн
Вăйна хунăшăн,
Çутта кайнăшăн,
Йулташăм, телей.

Ушкăна кĕрсе ĕçлеме тухрăн, пуç вăйна хурса есĕ тăрăшрăн тет вăл тата малалла та.

Çакна пĕтĕмпех виççĕмĕш пайĕ теме йураť. Кунта автăр хăй те, комунис çĕнĕ пурнăç тунăшăн хавасланаť, унăн хăйĕн те пĕтĕм ĕçхалăхне вăл çĕнĕ пурнăçа тума йăхăрас килет.

Йулашки тăвату йĕркинђе сăвă малтанхи сăмахсемпех пĕтет.

Анђах йулашки пайне (сакљуђђени) урăхла сăмахсемпе пĕтернĕ пулсан та йурамалла, шухăшĕ кăна пĕр пек пултăр. Хăш ђухне сăввăн виççĕмĕш пайĕ пирвайхи пайĕнђен урăхларах йе саç-

симех пулмасăр та пултарат̆, çапах та йулашки йĕркесем сакђутђени манерлĕ пулса тăраççĕ. Акă Ђĕкеçĕн «Атăл тулнă ђух» йатлă сăввине илсе пăхар тата. Унта йулашки пайĕ пĕрремĕш пайри пек сăмахсемпе пĕтмест, урăхларах пĕтет.

Малтанхи пайĕ: авттăр Атăл шывĕ тулнине сăнаса пăхат̆:

«Кашни çулах çуркунне
Атăл шывĕ тулнине
Кам пăхмĕши савăнса.
— Шурă кĕмĕл çийĕ ун,
Ансăр тесе ан та тун,
Йепле выртат̆ сарăлса.

Иккĕмĕш пайĕ: Кунта авттăр çуркунне Атăл çынсене мĕн тĕлĕшрен савăнтарнине кăтартса парат̆:

Хаљ луткасем, хаљ прахут
Атăл тăрăх хутран хут
Йăр-йăр йĕрсем йĕрлени,
Сар хĕрĕпе сар ађи
Луткă çинђи, ким çинђи
Кайăк пулса йурлани —
Çаксем пурте ђунăма
Савăнăçпа пуйтарма
Йури сиксе тухманши?
Атăл хăй те çуркунне
Савăнăçлă пурнăçне
Йури ђаплăн тумастйши?
Леш айккинђе, йăлăмра,
Вут хунă та сывлăшра
Йăсăрланат̆ тĕтĕмĕ.
Унтах çыран хĕрĕнђе
Теnellipe ким çинђе
Пулă тытат̆ пулăçĕ.
Хĕвел кăвак тӳперен
Кулса тăрса пĕçертсен
Пулă пуçлат̆ вылђама...
Йăлăмĕ те çуркунне
Йешĕл симĕс тумтирне
Хыпаланат̆ тăхăнма.

3-мĕш пайĕ: Кунта авттăр Атăл тулнине пăхса çуркунне çитнипе савăнат̆:

Ех, савăнăç, савăнăç—
Пур çĕрте те савăнăç,
Пур çĕрте те ђĕрĕлĕх».

0
Л-6

Йулашки пайӗнҫе кунта авттӑр ҫуркунне ҫитсен «пур ҫӗрте те ҫӗрӗлӗх» пулассине сиссе савӑнаҭ. Ку сӑвӑра малтанхи пайӗ пӗр пек мар, анҫах ҫапах та малтанхи шухӑшпа кайранхи шухӑш ҫыхӑнуллӑ тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен Атӑл тулнӑ хыҫҫӑн анҫах ҫуркунне ҫитмеллипех ҫитсен, «пур ҫӗрте те ҫӗрӗлӗх» пулса тӑраҭ.

## Пуплев сӑвӑ строккипе тан пулмалла.

Халӗ ӗнтӗ Куракӑн ҫав «Комуниса» йатлӑ—сӑввине илсе, авттӑр уйрӑм шухӑшсене, опрӑссене, карттинсене, урӑхла каласан, сӑвӑри пӗҫӗк уйрӑм шухӑшсене йепле майпа пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарса пынине (калаври тӗрлӗ сыпӑксем калава малалла тӑснӑ пек, сӑвӑра та тӗп темӑн уйрӑм пайӗсем сӑвва малалла тӑсса пыраҫҫӗ) астуса тухӑр. Авантарах пӑхсан, епӗр акӑ мӗскер куратпӑр: мӗн пур сӑвӑ тӑватшар йӗркеллӗ ушкӑна уйрӑлнӑ. Ҫавӑн пек ушкӑнсене **с т р о ф а с е м** теҫҫӗ. Строфара пилӗкшер, ултшар тата ытла та йӗрке пулма пултараҭ. Курак кашни строфара уйрӑм шухӑш кӑтартса пыраҭ. Пирвайхинҫе пӗр шухӑш, тепринҫе тепӗр шухӑш т. мал. та. Ҫавӑнпа вара кашни строфа пӑнҫӑпа пӗтет. Унтан тата кашни тӑватӑ йӗркеллӗ строфа пӗр пек икӗ пайа уйрӑлаҭ. Нийепле сӑвӑра та нихӑҫан та пӗр сӑвӑ сӑмахӗсем тепӗр сӑвва кӗме пултараймаҫҫӗ. Сӑмахран, Курак ҫапла ҫырнӑ пулсан:

> «Ушкӑна кӗрсе ӗ ҫ л е м е
> Тухрӑн. Пур вӑйна хурса
> Есӗ тӑрӑшрӑн».

Курак сӑввинҫе пӗр йӗрки те пӑнҫӑпа **ҫ у р м а ш а р** уйрӑлман. Ҫавӑн пек йӗрке варринҫе пӑнҫӑпа уйрӑлман сӑвӑсем пит аван, пит илемлӗ тухаҫҫӗ, мӗншӗн тесен йӗркене темиҫе пайа уйӑрсан сӑвӑ вырӑнне калаҫнӑ сӑмах майлӑ анҫах пулса тӑраҭ. Ҫырма тытӑниҫҫен малтан мӗн ҫинҫен ҫырассине авантарах шухӑшласа пӑхас пулаҭ, унтан вара тин шухӑш майлӑ сӑвӑ суйласа пырас пулаҭ.

## Сӑвӑра пӗр сӑмаха иквиҫ хут калани.

Сӑвӑсенҫе йе строфасенҫе кашнинҫех уйрӑм кӗске темӑсене мӗнле майпа йӗркелесе пынине вулакан систӗр тесен, **ҫ ӗ н ӗ с т р о ф а н а** ун умӗнҫе тӑракан строфан малтанхи сӑмахӗсемпе ҫырсан пит аван тухаҭ:

> Килҫӗ ырӑ ҫуркунне,
> Хӗвел саваҭ тӗнҫене,

1520 бр.

Килҗĕ йаҗĕ ăшăтса,
Хĕл йăхинҗен вăранҗĕ...

Йе тата:

Аслă арман пĕвинҗе,
Уйăх ишет ташласа,
Пулăсенĕн вăййипе
**Пĕве** тăрăх саланса
**Пĕве** тăрăх хурăнсен...

(Курак «Çуллахи çĕр»).

Йе тата К. Ивановăн «Нарспири» вăрманта йатлă сыпăкран:

**Шавлаť, кашлаť** сĕм вăрман,
Вĕçĕ хĕрри курăнмасť,
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан
Җарăнассăн туйăнмасť.
**Шавлаť, кашлаť** сĕм вăрман
Тамăкри пек ахăраť.
Те арçури, те шуйттан
Çав терийех ашкăнаť...

Сăвăри шухăшсем, карттинсем улшăнса пынине авантарах сис-терес тесен, çĕнĕ шухăша кăтартакан строфари сăмахсене пĕр пек-реххисене суйласа хурас пулаť. Ун çинҗен епĕр халҗ кăна кăтартса патăмăр: «Шавлаť, кашлаť сĕм вăрман...» Çак пирвайхи йĕркепе виççĕмĕш йĕркери сăмахсем пурте пĕр пек мар, унта тĕрлĕ сăмах-сем, анҗах вĕсене пурне те пĕр майлă тирпейлесе çырнă. Малтан «Шавлаť...» сăмах пур, вăл сăмах пирвайхи йĕркере те, пиллĕкĕмĕш йĕркере те пур. «Шавлаť, кашлаť» сăмахсем хыççăн кам шавланине кăтартса панă: «сĕм вăрман». Виççĕмĕш йĕркере «кутсăр-пуçсăр тăман тухсан вăрман мĕнле курăннине кăтартса панă. Çапла ĕнтĕ сыпăксене вуласа тухнă хыççăн хăвăрах аван куратăр: кашни йĕр-кери сăмахсене пĕр манерлĕ йĕркелесе хуни (пĕтĕмпех пĕр пек пулмасан та, пĕр пайне авантарах, килĕшӳллĕрех майласа хурсан), сăвăри сăмахсене çав тери хитре, йака кăтартса параť. Çапла çыр-нипе вара сăмахсем йакалаççĕ, вулама çăмăлланаççĕ.

## Сăвă ритмăлăхĕ.

Сăввăн тата икĕ уйрăмĕ пур: вăл рифмăллă унтан тата рит-мăллă (урăхла каласан, йурă пек йанравлă) пулмалла. Сăвва риф-măпа çырнипе вăл йурă манерлĕ тухаť. Çав йапалана йепле тумал-

лаши ăна? Сăвă килĕшӳллĕ ритмăллă (йанравлă) пултăр тесен, сăмахсене тĕрлĕ вырăна пĕлсе лартас пулаť. Йепле пĕлсе лартмалла? Акă мĕнле: сăвăра утаренисем слоксем ҫине пĕр пек ӳксе пымалла, кашни утаренишĕн слоксен шуђĕ пĕр пек пулмалла. Сăмахран:

Пĕлместĕни ес, ђăваш,
Мĕншĕн ҫак кĕтес йăваш?
Хусанкай.

«Хайар хум ҫапнипе
Усăлђĕ ҫĕнĕ ҫул (Ваҫанкка).

Кунта йулашки сăмахран пуҫне иккĕшĕнђе те пĕр утаренипе тепĕр утарени хушшинђе икĕ слок, урăхла каласан, икĕ утаренисĕр слока пĕр утарениллĕ слок тивет. Утаренисĕр слоксене туртса пырсак, утарениллисене, пăнђă лартсан, пирĕн вара акă мĕн тухаť:

Ҫапла утарениллĕ слоксемпе утаренисĕр слоксем пĕр-пĕринпе улшăнса пырсан анђах сăвă пулма пултараť.

Авантарах ăнланас тесен, есĕр хăвăрах тĕрлĕ сăмахсем аса илме пултаратăр. Кашни сăмахра икĕ слок пултăр. Пĕри (малтанхи утаренисĕр, тепри (ун хыҫĕнђи) утаренипе. Ҫав сăмахсене йĕркипе ҫырса тухсан, малта кăтартнă сыпăкри пекех, кунта та сăвă йурă майне ҫаврăнаť.

«Хурлантăм хам та ĕлĕк,
Ҫук мар, пурах пăртак ман айăп,
Анђах халђ пултăр вăл тĕлĕк,
Тĕреклĕрех ҫулпа еп кайăп».
Хусанкай.

«Ҫĕн халавлă ҫĕн ҫулталăк
Ҫитрĕ,—шăппăн пуҫланаť;
Ҫĕнĕ ҫулăн ҫĕнĕ алăк
Систермесĕр усăлаť».
(Елкер «Ҫĕнĕ ҫул»).

Акă тата урăх расмерпа ҫырнă сăвăсем, урăхла каласан, ку сăвăра утаренипе утаренисĕр слоксене урăхла майпа уйăрнă.

«Улпутсен пурнăҫĕ илемлĕ иккен...
(«Йеркĕн» Шупуҫҫынни).

Ку йĕркере пĕр утарениллĕ слока икĕ утаренисĕр слок тивет. Кунта ĕнтĕ епĕр литтераттурăри тĕп виҫесене пăхса тухрăмăр.

ђи малтан виçене суйласа илес пулаѓ. Виçене авантарах суйласа илме пёлеймесен, вырăнсăр виçепе çырса сăвва пĕтĕмпех пăсса пăрахма пулаѓ. Сăмахран калăпăр, патша йыттисем—шантармăсем рапођђисене çакса вĕлерни çинђен, йе çынсене асаплантарни çинђен çырнă ђух, хăвăрт ташламалли виçепе çыраймастăнах. Саввăн шухăшĕпе унăн виçи уйрăлмалла мар пулмалла.

Пĕр пек илтĕнекен слоксем кашни ушкăнне (сăмахран:—йе—йе,— т. ыт. те) стоппа теççĕ.

Сăвăсенђе тата урăхла йăвăр пĕрлешнĕ стоппасем (тăвата слокран, пилĕк слокран пĕрлешнисем), унтан тата пĕр тĕрлĕ виçесемпе çырни хушшинђе т ĕ р л ĕ виçесемпе çырнисем ђас-ђасах тĕл пулкалаççĕ.

Утаренисем йаланах пĕр йĕркепе пымаççĕ, сăвăра хăш ђухне урăхла майпа çырнисем те тĕл пулкалама пултараççĕ. Çапла вара, хăш ђух «а н а п п е с т п а» çырнă йĕркерех (— —,) çакăн пек (—,) вырăн, урăхла каласан «й а м п ă п а» çырни пулма пултараѓ. Йалти ђастушкăсенђе, халăх йуррисенђе, халђхи вăхăтра тухакан сăвăсенђе те ун пек вырăнсем ђас-ђасах тĕл пулкалаççĕ, çавăн пек çырни те сăвва пит илемлетме пултараѓ.

Пример:

> Çырм**а** йухаѓ к ĕ р л е с **е**
> Асл**ă** й**а**лăн ç у м ĕ п **е**...
> Хĕв**е**л тĕр**ĕ** т ĕ р л е с **е**
> Выђ**а**ѓ унăн ш ы в ĕ п **е**... (Нарспи).

Кунта «çырма» «йухаѓ» сăмахсене йампăпа çырнă (утарени иккĕмĕш слок çинђе), виççĕмĕш сăмах «кĕрлесе»—а н а п п е с т п а çырнă виç слоклă сăмах, утаренийĕ йулашки слок çинђе (кĕрлес**е**). Малалла тепĕр йĕркене пăхар: «Аслă йалăн çумĕнђе». Кунта утарени пирвайхи слок çинђе (хорейпа çырнă: **а**слă й**а**лăн). Йулашки сăмах анаппестпа çырнă (çумĕп**е**). Çапла вара йампă хыççăн анаппест, анаппест хыççăн хорей улшăнса пыма пултараѓ. Сăвăра утаренисене хăлха илтнĕ майĕпе çыраççĕ (лартаççĕ). Кунта кĕскен кăтартнисем хăвăр çырнă сăвăсене пăхса, тĕрĕслесе тухнă вăхăтра, йе хăш ђух çырма йăвăр вăхăтра анђах пулăшма пултараççĕ.

Кашни йĕркене уйрăм илсе пăхас тесен, çакна каламалла пулаѓ: кашни йĕркен вăрăмăшĕ тĕрлĕ пулма пултараѓ. Вăл йĕркере миçе утаренинђен (урăхла каласан стоппаран) килет.

## Рифмăсем.

Халĕ кунта рифмăсене пăхса тухар. Рифмă тесе йунашар, йе йĕрке урлă йĕркесен вĕçĕ пĕр пек пĕтнине калаççĕ. Сăмахран çак примера илсе пăхарха:

Ђăваш калаçаĭ хуллен,
Кĕтеççĕ хыпар куллен.
Хыпар илтĕнмест ниçтан,
Харуша сăмах «ристан». («Хури»).

Кăвак шуçăм килђĕ те,
Хирте шăплăх **ĕнтĕ çук.**
Тĕтре хăйĕн аллипе
Çитсе тытман **вырăн çук.** (Шаланкă «Ирхине»).

Хĕвел тухнă тухман**ах**
Тĕттĕм кайрĕ йал çинђе
Куçне уçнă-уçман**ах**
Ђăваш лараĭ мунђинђе... (Нарспирен)

Йулашки сăвă татăкĕнђе авттăр строфин пирвайхи йĕркине виççĕмĕшĕпе рифмăласа пыраĭ, иккĕмĕш йĕркине тăваттăмĕшĕпе рифмăлаĭ (тухманах—уçманах, йал çинђе—мунђинђе).

Хăш йĕркене хăшĕнпе рифмăласси кашни сăвăçăран хăйĕнђен килет. Хăш ђухне хăш-пĕр авттăр икĕ çуммăн тăракан йĕркинех рифмăлаĭ. Сăмахран: Шупуççынни хăйĕн «Йеркĕн» йатлă вăрăм поемин «Урха» йатлă пайне (йурринe) çумĕнђи йĕркесене рифмăласа çыраĭ. Акă унăн кĕске сыпăкĕ:

Аслă Сившура,
Вĕрет йуманл**ăхра,**
Пуйан та ђаплă пурăнаĭ **Урха:**
Ун хирĕсене виç**мен**
Çаранĕсене ђикеле**мен,**
Вăрманти йăвăçне шутла**ман**
Выђăх-ђĕрлĕхне те çын су**ман...** (Шупуççынни. «Йеркĕн»).

Йе тата:

«Камăн ал-ури **вирлĕ,**
Çĕре урлă та **пирлĕ**
Сухаласа **тĕрмешет,** —
Выç вилĕмпе **кĕрешет.**
Кам тӳсӳллĕ, хăй**уллă,**—
Тĕпсĕр вырăнсем **урлă**
Тимĕр кĕперсем **хываĭ,**
Ђуллă сăртсене **ђаваĭ?..** (Елкер «Кам усăллă?»).

Рифмăсем пурте пĕр пек мар, пĕр слокли те пур, иккĕлли, виççĕлли, тата ытлараххисем те пулаççĕ. Рифмăна йĕркен йулашки утаренийĕнђен шутлаççĕ. Сăмахран: «ђас манас—уйанас». Кунта рифмăсем: а—нас; а—нас урăхла каласан, икĕ слоклă.

Пĕр слоклă пример: влаç—храç. Пухăн**сан**—пăрах**сан**. т. ыт. те. Акă иккĕллĕ: çĕр**ĕнђе**—кил**ĕнђе,** ĕçк**ĕпе**—шыв**ĕпе** т. ыт. те. Виççĕллĕ: пул**сассăнах**—кур**сассăнах,** шут**ламасăр** —суйламасăр т. ыт. те. лĕ: пул**сассăнах**—кур**сассăнах,** шут**ламасăр**—суй**ламасăр** т.ыт.те çыраççĕ. Икĕ сăмаха пĕрле хушаççĕ те, рифмă пулса тăрать: Акă Рсайăн «Аслати умĕн» йатлă поеминђен:

> Пайан Мишук ытла та пит хурл**аннă,**
> Пайан Мишук ларать ђавсаланса;
> Шур çÿçĕсем çамки çине ун **аннă,**
> Йаваш куçсем йĕпеннĕ ђарăлса... (Рсай).
> Тĕттĕм кайрĕ йал **çинђе**
> Ђăваш ларать мун**ђинђе** («Нарспи»).

Вăл унта «хурланнă» сăмаха ун аннă (икĕ сăмах) сăмахсемпе рифмăлать.

Паллах ĕнтĕ, çавăн пек рифмăсем пит пĕлсе çырсан анђах килĕшÿллĕ пулма пултараççĕ. Сăвăçă çырнине вулакансем ăнланаймасан, унăн усси пулас çук, çырни вулакансене ăнланмалла пултăр, вĕсем вăрах шухăшласа вăхăђĕсене ирттерсе ан ларђђăр.

Рифмăсене йулашкинђе (сăмахăн вĕçĕнђе) кăна мар, тата йĕрке варринђе те, май килнĕ вăхăтра, лартса хăварма пулать. Сăмахран:

Гайлăк пÿртĕм, ма ес тÿртĕм... тата малалла та. Рифмăсем хушшинђе тата пĕтĕмпех пĕр пеккисем те пур: умра-тумра, хире-пире т. ыт. те. Кунта рифмăланнă сăмахсен вĕçĕсем пĕр пекех илтĕнеççĕ. Кунсăр пуçне тата пĕр пекех мар, илтĕнессе анђах пĕр манерлĕрех илтĕнекеннисем пулаççĕ. Сăмахран: шăркара-шăрăхрах, çĕрле-çĕмеле, т. ыт. те.

Рифмăран мĕнле усси пур вара, сăвăсене мĕн тума рифмăпа çыраççĕ? Рифмăпа çырнă йапала (сăвă) вулама çăмăл, тата пире кирлĕрех сăмахсене паллă туса, уйăрса хурса, тенĕ пек, манмалла мар астутарса хăварать. Çакна сăнас тесен, малта кăтартнă сыпăксене вуласа тухса ђухлама пулать.

## ЙУЛАШКИ САМАХ.

Йулашкинђен çамрăк писсаттĕле—йалкора мĕнле йапаларан çырма пуçласси çинђен кĕскен кăна калас, тетĕп. Ĕç тĕрлĕ тĕслĕ пулассине есĕр ку кĕнекере аван куратăр, ђăнахах та çав, çырас тесен, тĕрлĕрен çырма пулаť: йе калавсем, йе ођђĕрĕксем, йе сăвăсем, йе тата трамăсем. Нумайăшĕ малтан сăвăпа пйессăран çырма пуçлаççĕ. Анђах авантарах шухăшласа пăхсан, йалкорсене малтан пĕђĕкрех илемлĕ ођђĕрĕксенђен тытăнни пит аван.

Ођђĕрĕк вăл йалкор саметкинђен нумай уйрăмах та мар. Ђăннипе каласан, ођђĕрĕк вăл çав йалкор саметкийех, анђах ăна ху курнă йапаласем çинђен опписсанисем çырса илемлетнĕ.
Ођђĕрĕкран калава ţа куçма çăмăл. Калавра вара шухăшласа кăларнă, йе пурнăçран илнĕ сыпăк кăтартаççĕ.

Повĕçре пурнăç сыпăкне кăна мар, пĕр çыннăн, йе темиçе çын пурнăçне пурăнма тытăннинђен пуçласа мĕн пĕтиђђенех çырса кăтартма пултараť. Повĕçрен вара просăллă происветенин ђи пысăк формине—роман çырма куçма пулаť.

Ођђĕрĕксемпе калавсем çырма вĕреннĕ хыççăн, сăвăсемпе театтăр вађђи пйессăсем çырма пит çăмăл. Театтăр пйесси, тиалăксемпе анђах çырнипе, хĕнтерех, мĕншĕн тесен, унта пит хĕрӳллĕ сăмахсемпе çырмалла, çӳшет тума пĕлни кирлĕ, харак гĕрсене пит пĕлсе кăтартни кирлĕ, кĕрешĕве вăйлатнăçем вăйлатса çĕклентерсе пымалла, пĕр сăмахпа каласан, пйессă çырма ăсталăх кирлĕ.

Анђах йепле пулсан та, ĕçлекенсемпе хресђенсен кореспотенђĕсем пурнăça авантарах пăхса, пурнăç йепле шунине куракан куççем пулаççĕ пулсан, тата вĕсем илемлĕхе сисеççĕ пулсан, кашнийех хăйĕн çырулăхне тăрăшса вĕренсен, тата çак кĕнекере кăтартнă майсене (йĕркесене) ăнласа илсен, писсаттĕлсен ретне тăма пултараççех.

Çырма вĕренес текен хресђене çывăхри хулари литтераттурă орканисатсисемпе çыхăну тытни пит усăллă пулмалла. (Пĕтĕм сойусри пролеттари писсаттĕлĕсен Ассотсиатсийĕ вырăсла ВАПП теççĕ йе хресђен писсаттĕлĕсен сойусĕпе Пирĕн Шупашкарта «Канаш» сойусĕ, вăл ВАПП-ăн çексийĕ). Кунтан пуçне тĕрлĕ шурналсем вулама тăрăшас пулаť, шурнал ретаксийĕсемпе

çыхăнас пулаť, вăл шурналсенђе хресђен çамрăк писсаттĕлĕсен просветенийĕсене пиђетлеççĕ.

Хăвăн литтераттурă ĕçĕнђе çак виçĕ правĕла аван астăвас пулаť: вулакана манас пулмасť, есĕ уншăн çыратăн; унăн нушисене унăн ыйтăвĕсене, интересĕсене, хăвăр çырнине вăл ăнланма пултарнине астăвас пулаť.

Пурнăç çинђен йуптарсса çырас пулмасť. Пур тĕлте те аван тенипе кăна мар, тепĕр йенђен тата «хура краскăсене» çăралатас пулмасť, урăхла каласан: йалан нађарри çинђен кăна çырни вырăнлă мар, пурнăçа тĕрĕссипе кăтартса пама тăрăш.

Тата çакна хытă астăвас пулаť: пролеттарипе хресђен аллинђе литтераттурă ахаљ тăнă вăхăтра вуласа кулмалли йапала кăна ап пултăр, литтераттурă ĕçхалăх аллинђе ђуралăхран хăтаракан, кĕрешĕве пулăшакан хĕçпăшал пулмалла. Окťапĕр револђутси пире ђуралăхран çăлăнмалли çул кăтартса пађĕ, литтераттурă та çырас тĕлĕшпе пит те пысăк йăвăрлăхсемех пурха. Çапах ĕçлекен халăха çав çулпа илсе пымалла.

Пирĕн—ђăвашсен—илемлĕ литтераттурă Окťапĕр револђутси хыççăн анђах сарлака çул çине тухрĕ. Çак иртнĕ 10 çул хушшинђе пирĕн илемлĕ литтераттурă ђылай малалла кайрĕ. Пирĕн çĕнĕрен ўсекен писсаттĕлсемпе поетсем ĕçйалккорсем еретĕнђе пиçсе çивĕђленеççĕ. Ђăвашла тĕрĕс, илемлĕ çырма, вĕренсе çак кĕнекере кĕскен те пулин каланисем тăрăх, илемлĕ просветенисем çырасси çине ытларах пăхни кирлĕ. Ĕçе лăпăр-лапăр тăвас вырăнне—темиçе хут шухăшласа, тĕплĕн туса пырас пулаť. Вара тин епĕр ђăваш ĕçхалăхĕшĕн йуравлă,усăллă литтераттурă тăвăпăр.

## ХУШСА КАЛАНИ

Хутошĕствăллă сăмахăн тĕрлĕ прийомĕсем пуррине авантарах кăтартас тесе, епĕр кунта примерсем парăпăр: йалкор саметкинђенех ођђĕрк, йе калав, йе сăвă, йе тата пйессă тума пулаť.

Малалла кăтартнă саметка пĕр тĕттĕм йалта пурăнакан йалкор хаçата çырса йанă. Çак саметкă литтераттурăн урăх формипе çырнă йапаласемпе сăнаса пăхсан, епĕр акă мĕскер куратпăр: кашни саметкăранах, кашни темăранах тĕрлĕ литтераттурă просветени çырма пулаť.

## Йалкор саметки.

Кăçал, 1925 çулта, авкустăн йулашки ђислисенђе, йал урлă икĕ йероплан вĕçсе кайрĕç.

Пирĕн йал—Кĕçĕн Ентĕрйалĕ—хăй ĕмĕрĕнђе те йероплан тавраш курман. Йал тĕттĕм, суккăр. Сасартăк çутă кун хушшинђех, çутăллах, мушиксем ўкĕрнĕ сасă илтеççĕ. Тĕрлĕ тĕлелле пăхкала пуçларĕç. Анђах йапала тавраш курăнмасан та, ўкĕрнĕ сасă çывăхăрнăçем çывăхăрса килет, çавăнпа атте-аннесем хăраса ўкрĕç. «Ађасем пытанăр, выђăхсене хăваласа хупăр, пурне те вăл пусса вĕлерĕ» тесе шавлаççĕ. «Тĕнђе пĕтет, ах тур-тур»,—кăшкăраççĕ тепĕрисем. «Йероплан, йероплан» тесе кăшкăрђĕ пĕр ађа çынсем хушшинђе,—пурте сăмсисене çўлелле тăратрĕç. «Вăт тĕлĕнмелле йапала» калаçаççĕ мушиксем, йеропланeсене куç курмиђђен пăхса.

*Йалкор.*

## Саметка йепле ођђĕрке çавăрмалла.

### Ођђĕрк планĕ.

1. Малтанхи сăмахсем: пирĕн йал тĕттĕмре ларни.
2. Вĕрентекен çуккипе тĕрлĕ кирлĕ мар йапаласене ĕненни.
3. Йал çинђе ђи пирвайхи йероплан курăнни, мушиксем ăна мĕнле пăхни.
4. Хĕрарăмсем йероплана мĕнле пăхни.
6. Хĕрлĕ çартан килнĕ çамрăк çын каланинђен мĕн пулни.

Йулашки йĕркесем: ваттисен тĕрлĕ йапалана ĕненни.

## «Пирĕн йал, тата ун çийĕнђи пирвайхи йероплан курăнни».

### (Ођђĕрк).

Пирĕн йал вăрман патĕнђе выртат. Ђăтлăхран тухнă теме те пулаť: упан тĕттĕм кĕтессинђен йăраланса тухрĕ, хыр тăррисене хăй çинђен силлерĕ, çĕрçырлипе кăткă йăвисене çухрăмĕ-çухрăмĕпе тепĕр йенне пăрса салатса пĕтерђĕ.

Пирĕн йалпа мухтанакан çынсем те пур. «Пирĕн вырăн пит аван — сасђĕвĕ çук, теççĕ вара вĕсем,—йал кĕçĕн, пур йапаларан та инçе: пире те никам тивмест, епĕр те никама та тивместпĕр».

Ку тĕрĕсех çав: тискер вăрман пиртен пĕр çухрăмра кăна, ђи çывăхри кăтăр-катăр хула пиртен 60 çухрăмра лараť. Пĕр йапала çинђен кăнә астăватăп, асăнађђĕç, ăна та праçниксенђе ĕççĕр аптăранă вăхăтра кăна «Турăран инçе пурăнатпăр тесе, пăшăлтатаççĕ. Çапла ĕнтĕ, пирĕн тĕксĕм вырăнта пупа та питех пуççапсах каймаççĕ: «Ђиркĕве çитиђђен урисем йăтăнса анĕç». «Çавăнпа вара (пупшăн мар та) фелђшăр вырăнне те, милитси вырăнне те, политçут вырăнне те, Васса йумăç карђăк хăй хĕрĕпе аван ĕçлет. Пĕр сăмахпа каласан, тĕттĕм вырăн. Крашťăн вăрçи вăхăтĕнђе пирĕн йалтан пилĕк çын фронта çакланђĕç, вĕсем те калла йала таврăнмарĕç: йал халђхи пурнăçăн аслă çулĕпе çыхăнаймасăрах йулђĕ.

Анђах çакна манас пулмасť. Сăмахран, йероплан мар, автомопилђ, йе çуранлă урапа та çулпа пыракан лашасене йе ун хуçисене хăратса хĕрнелле пăрахса тартман. Ђăнах, çавăн пек йапаласем çинђен ыйтсан, паллах, нумайĕшĕ: «йепле курман пулаť, курнах» теççĕ вара. Анђах хăш та пĕр карђăка итлесессĕн, ним калама аптăратăн: вăл курнă йапаласем ăна тĕнђене «виçĕ кит тытса тăни» манерлех туйăнаť.

Акă нумай пулмасť, пирĕн йалта пĕр йапала пулса иртрĕ. Ку ĕç çуллахи кун, праçникре пулђĕ. Хĕвел анманха, пĕренесем çинђе купи-купипе мушиксем калаçса лараççĕ, вĕсем хушшинђе епĕ те ларатăм: тепĕр çурт умĕнђе хĕрарăмсем калаçса, шавласа лараççĕ. Сасартăк инçетре йероплан ўкĕрни илтĕнсе кайрĕ. Пĕрик çеккунтранах çав аппарат пирĕн йеннелле вĕçсе килни паллă пулђĕ. Пĕрле ларакан мушиксене епĕ каланă йероплан çав иккенне систерсе хутăм (килнĕренпе тĕрлĕ йапаласем çинђен каласа паркаларăм ĕнтĕ епĕ). Тĕлĕнсе пăхма пуçларĕç. Анђах ун сасси вăйлăланнăçем вăйлăланнине илтсен, курăннă машшин пирĕн çинелле килме пуçласан, хăшĕ темĕскерле хăраса кайни палăрђĕ, вĕсем тата тĕлĕнерех пăхма пуçларĕç. Пĕри, питех ватă марха, манран йерипен кăна ыйтрĕ:

— Ўкмĕши вăл пирĕн çине?

Тепри те йерипен кăна ман йенне çаврăнса каларĕ:

— Киле çурта харам тумасťи вăл?

Çавăнтан шалт тĕлĕнмелле, йалта кам та пулин пĕр хитре, йапала тусассăнах вара, ыттисем: «пăхха есĕ ăна, йепле вăл

тĕлĕнмелле тунă», йе тата «вăттăк йапала, мур хирменскер» теççĕ вара. Халĕ пурте пекех пĕр сиккелемесĕр йероплан килнине хăраса пăхса тăраççĕ. Пурте унăн сассинђен ăсран кайнă. Кайран йероплан пĕр аллă сашĕнлĕ çӳллĕхри йал варрипе сăрăлтатса вĕçсе кайнă вăхăтра, хĕрарăмсем хайар сасăпа кăшкăрса йани пире йероплан çинђен куççене илтерђĕ. Урам тăрăх пăхма çук, ăçта килнĕ кунта ђупкалаççĕ: пĕр кĕтӳ хĕрарăм пĕр çын пӳрт алăкĕ патне пырса тăваннă, ни кĕреймеççĕ, ни тухаймаççĕ. Хăшĕпĕри пирĕн паталла ђупса килеççĕ, теприсем тата ађисене килелле çавăтса тараççĕ. Вĕсем пĕрмай кăшкăрашнă сасăран пĕрик татăкĕ анђах пуçа йулђĕ:

— Пурне те, пурне те вĕлерĕ ку сăнсăр йапала!

— ... тĕнђе пĕтет!

Машшин йалтан иртсе кайсан пĕрин хыççăн тепри хăрами пулђĕç. Çапла йулашкинђен епĕ «çунатлă урапа» çинђен каласа ăнлантартăмах пулмалла. Нумайĕшĕ çав калавпа «виçĕ кит» çинђен калакан калав пек çеç мар, урăхла интересленђĕç пулмалла.

Ытти стариксен пуçĕнђе, пуринђен ытла ват карђăксен пуçĕсенђе, вăл вăхăтра мĕн пулнине пĕлейместĕп. Мĕн те пулсан калама хĕн: йероплан пулăшнипе пулсан та темиçе ĕмĕр вĕçсе кайасси пит çăмăл ĕçех мар (çитмĕл суллă пуçа). Çавăнпа йероплан хыççăн пирĕн пӳртсенђен, вутлă çĕленсен, вăрман шуйттанĕсен т. ыт. те вăрăм хӳрисем тăсăлђĕç пулмалла çав «хăрушă» кун каçхине.

## Саметкăран калав тăвасси.

### Калав планĕ.

1. Тĕттĕм йал. — Мушик мана икĕ карђăкпа мĕн пулни çинђен каласа паратă.

2. Карђăксем йумăç патне кайнă пулнă.

3. Çулта каçа йулнă; каç пулса килет; хăрушă.

4. Тĕттĕмре йапаласенђен хăранисем аса килсе кайаççĕ.

5. Хирте хăрушă сасă илтĕнсе кайатă, карђăксем хăраççĕ.

6. Хайсем хăранине калаçса сиресшĕн, анђах нимĕн те тухмастă.

7. Ӳкĕрни вăйланатă, вăл сасă вĕсене темле усал сасси пек туйăнатă.

8. Йулашкинђен карђăксем ним пĕлмесĕр тарма тытăнаççĕ.

Анни каланă сăмахне ĕненмесĕр, епĕ ун сăмахне пӳлетĕп. Вăл ĕненмесен Ĕçтăвкома кайса тĕрĕслеме хушаť.

Унта каласа панисене епĕ хам сăмахпа каласа кăтартатăп: «Йероплан анма пуçласан карђăксем вилме пикеннĕ».

## Анна карђăкăн йулашки минуђĕсем.

(Калав)

Епĕ йал тулашĕнђе Ентрийе итлесе ларатăп.

Авкуст пĕтес ђухне аван та-çке йалта? Кĕркунне тĕплĕ, аван хуçа пекех—тирпейлĕ: пур йапалана та киле пуçтарнă. Çаранти утăпа—сарайсем тулнă? Хĕвел пăхма та савăнăçлă. Кунĕ-кунĕпе куçне хупмасăр пăхаť. Çав тери лăпкă тата. Ерешмен картисем вĕçеççĕ пулсан та, вĕсем мĕнпе вĕçнине пĕлме çук» теççĕ вара ваттисем. «Пуриншĕн те хăйĕншĕн саккун пур: хĕрт-суртăн хăйĕн, хырă шишкисене—хăйсене урăх саккун, çапла, ĕнтĕ, кашни пĕрђе уйрăм саккун». Ĕлĕкренпех çапла. Ав хĕрарăмсем Иван патĕнђе урамра лараççĕ, мушиксем урам варринђе,—ĕлĕкренпех çапла çав вырăнсенђе пухăнађђĕç. Тухса лараççĕ те вара, кун çав тери аван, пурне те хăй ывăç тупанĕ çинђе хĕвеле кăтартнă пек: пăх ĕнтĕ пирĕн йал çыннисем çине, мĕн кирли пур те пур.

Çапла.

— Çапах та ун ђухне мĕскер пулђĕ сирĕн, ыйтатăп епĕ.

— Мĕнле калан ĕнтĕ, ун ђух та каç пулиђђенех ларнă пулăттăмăр, анђах пĕр ĕç тухса кайрĕ. Пулђĕ—нимĕн те тăваймăн: пурте арпашса кайрĕç, хĕрарăмсем макăраççĕ, ађасене киле илсе тарђĕç, епĕр хамăр пĕр çĕрелле ђупса пухăнтăмăр. Пăхатпăр: карђăка темĕскер пулнă. Вăл çакăнтан пулса кайрĕ: кăнтăрла çитерехпе Анна карђăк хĕрринђи Матĕрнепе Шутиххă йалне кайнă. Матĕрне йумăç панђе ыларах та ларнă: ун ĕçĕ паллах ĕнтĕ пĕлтĕр те, кăçал та, ыљăх ӳкет, мĕн тăвасха. «Сыхлан,—тет йумăç карђăк ăна—хура арçынтан, тĕттĕм вырăнтан, хура шывран сыхлан». Таврăнаççĕ кайалла, Матĕрне çак сăмахсене асра тытаť «мĕне пĕлтеретши ку йапала?»—шухăшлаť вăл. Йала çитме пĕрик çухрăм кăна йулнă, анђах Матĕрне карђăкăн урисем ывăнаççĕ. Каç пулса килет, иккĕш те сисеççĕ. Çитменнине тата Çӳлĕ йалĕнђен

пĕр тĕттĕм вырăн—хырă вăрман татăкĕ—пур. Паллине паллă вырăн та, анђах усал вăл. Хамăр вырăнти те тăшман—хурăнташ мар. Çавă та пур, тата, усали, йе урăх йапалаи, хĕрарăмсем шикленеççех. Карђăка ђерет çитрĕ пулмалла. Тĕттĕм вырăн патнелле çитерехпе çак йапала тухса кайнă. Унта сăрт хыççăн çул çав тĕттĕм тĕлелле илсе пыраť, йĕри тавра икĕ йенђе—тĕмсем лараççĕ. Карђăка темĕскер тухассăн туйăнаť, унăн ђĕри сикет. Тĕмсем ун çине пăхса ларнанах туйăнаççĕ. Куçа курăнни кăна мар, тĕмсем ђăнахах хайар куçĕсемпе пăхса лараççĕ, çветтуй Варварийе асăнаť. Пыраť малалла. Вăрмана кĕме пĕртте ђун туртмасť, кăшт кăна ларса канасђĕ. Тепĕр йенђен тата тĕмсем хăратса лараççĕ. «Пулăш мана турă» тет вăл. Матĕрне Анна карђăк шикленнине сисет. «Мĕскер есĕ,—тет вăл—мĕскер есĕ, асанне?». «Ватăлса çитрĕм... пăхха, тĕттĕмленсе килет: киле çитсе ўкесђĕ...». Усал шухăшсене сирме карђăк урăх сăмахсем хускатса йарасшăн, пуçа аван мар шухăшсем кĕреççĕ: аса илет, ĕлĕк вăл хĕр ђухнех,—пĕрре каçпа «шыврисем» пĕр çынна ђĕтретсе вĕлернĕ. Ирхине Ивана тупрĕç, хытсах кайнă Иван, йĕри тавра туратсене ватса çĕмĕрсе пĕтернĕ, кĕçĕн шуйттанĕсем сиккелесе тухса пĕтернĕ пулмалла. Матĕрне те пуçĕнђен усал шухăшсене сиресшĕн, анђах каçа хирĕç ун ђĕлхине те вырăнсăр йапаласем çакăнаççĕ: акă вĕсен йенђе те пирĕнни пек, уйрăм тĕттĕм вырăн пур,—ăçтан пулнăха вăл. Унтан пĕр мунђана çĕлен кашни каçах вĕçсе пырађђĕ. Вăл ађине çуратаť те пăхаť»... Матĕрне Анна карђăк çине пăхса илет те, леш тата хăй те ун çине тĕлĕнсе пăхаť, иккĕш те пĕр-пĕрин куçĕнђен хăрав пуррине сисеççĕ. Çав вăхăтрах тĕмсем хушшинђен темле сасă илтĕне пуçларĕ. Малтан çын ахлатнă пек туйĕнђĕ. Ку аван йапала маррине Матĕрне малтан сисрĕ,—карђăкран çăлăкăç кĕтнĕ пек, унтан ыйтаť: «кам вăл асанне?» Леш тата васкаса кăна сăхсăхса илђĕ те, пĕтĕм ватă вăйне кăларса васкаса утма тытăнаť, йĕри тавра пăхкаламасť, йĕркене аван пĕлет. Киле çитме çур çухрăмран та ытла мар, çав тĕттĕм вăрмантан иртесси анђах. Вăрман патнелле çитеççĕ, пысăк тĕмсенђи сайра пысăк хырсенђен иртрĕç, анђах çав вăхăтра сасартăк хыçалта ўкĕрни илтĕнсе кайаť, урисемпе кĕмсĕртеттернĕн туйăнаť. «Асанне!»—кăшкăраť Матĕрне ун аркинђен тытса—асанне! вĕсем, вĕсем, пĕтмен йапаласем,... турă çăл пире. «Турă хăвăн етемўне çăл!». Матĕрнене салтак арăмĕ аса килет: çĕлен... салтак арăмĕ ађа тунă...

Ђăтлăхран туха пуçларĕç—вăрмана такам шăлса тасатнă пек туйăнаť. Карђăк—васкарах утаť. Анђах ватăскер тарса ĕлкĕреймест. Малалла утнăçемĕн хыçалтан, кӳлĕ йенђен сасă, хăрушă сасă, çывăхарнăçем çывхараť. Сăрăлтатма ђарăнђĕ, ђăтма çук ӳкĕрет. Çирĕм-вăтăр сысна пĕрле пухса ђикнĕ ђух çухăраççĕ, ку та çавăн пекех çухăрса йан йараť. Урисемпе илемсĕр кĕмсĕртеттерет. Хăй курăнмасť, анђах ӳснĕçем ӳсет... хăлха йанăрса тăраť. Карђăк ђăтаймарĕ, ун хыççăн тата Матĕрне те—ђупма пикенеççĕ. Аран-аран вăрмантан хашăлтаткаласа тухрĕç, йалалла çавăрăнђĕç. Анђах леш кусран çухалмасť, вăрман хыçăнђен сиксе тухрĕ те, акăраť тӳсме çук, пĕлĕте веç хупласа илђĕ...

— Ну халаппусем те çав санăн. Парха, пĕђĕккĕ кăна ђĕркесе тивертсе йарар. Епĕ Ентрийе хам акса тунă тапака ђĕпĕтсе патăм та, вăл çавăнтах ӳсĕрсе йађĕ.

— Хайар та-çке, хăлхине вĕрес йапала!

— Çапла, тăван, ман шутпа вăл тапака турттарсан, сирĕн усаллăрсем те веç ђăнтăхса пĕтĕђђĕç...

— Есĕ халап тетĕн—тытăнђĕ вăл ӳсĕрме ђарăнсан,—çук, тăван, халап мар.

Калăн тата, сирĕн карђăка вилме вăхăт çитнĕ, çавăнпа ун пуçĕнђе темĕн те пĕр çӳрет, Матĕрни те çав пуçне йумăç патнĕ хăварнă пулмалла.

— Ну йурĕ, санни пек пултăр, анђах йал йепле тата?..

— Мĕнле йал? Йал марçке ха ăна... Матĕрнепе карђăк пынă, тетĕн вĕт есĕ?...

— Çавă пур та унăн, пĕтĕм йал ђупса пухăнђĕ: калатăп çке, епĕр ђупса пухăнтăмăр тесе.

— Апла пулсан, епĕ нимĕн те пĕлместĕп. Ун ђух сирĕн праçник пулнăи вара?

— Епĕ çавна калатăп ть сана: ун ђух темле праçникђĕ, халђхи пекех лараттăмăр.

Вара.

— Ђимха, ђарăн. Праçникре сирĕн пурте сăмакун ĕçнĕ пулмалла, карђăкпа Матĕрне сире ӳсĕр пуçсене темĕскер суйеçтерсе

панă та, сирĕн ӳсĕр пуçăр куçсенђе вăл йапала ӳссе пĕлĕте çитнĕ. Кайран вара мĕскер тăн пулнине, мĕскер тĕлĕкре курăннине хăвăр та маннă.

Еп куратăп, Ентри ман сăмахсенђен тĕлĕннĕ, вăл куçĕсене ђарса пăрахнă, епĕ ăна темĕскер çинђен каланă пек туйĕнђĕ пулмалла.

— Ну йепле вара,—малалла калатăп епĕ,—çавăн пек пулни, йе епĕ пурне те сисеймерĕми?

Пĕр вăхăт ђĕнмесĕр ларсан, вăл калаҍ:

— Çук, тăван, сисеймерĕм. Мана шанмасан, ыран есĕ вулăсра пулан, претçетаттĕлтен ыйт: пирĕн вăл парттире тăракан çын, суйеçтерес çук.

Тепĕр кунне епĕ ђăнахах вулăсра пултăм, анђах претçетаттĕлтен ун çинђен ыйтмарăм, мĕншĕн тесен Ентри калани те ђăн иккенни паллах. Ку йапалана ђăнахах теçетке çурă çын курнă, вĕсенђен никам та ӳсĕр пулман, мĕншĕн тесен вăл кун ахалђ вырсарни кун анђах пулнă. Матĕрнепе карђăк нимĕн те суйеçтермен. Карђăк, телейне хирĕç, сывах йулнă, пĕрик кун ђирлесе выртнă хыççăн, сывалнă. Сывалсан кайран вăл йапала çинђен темиçе хут та каласа кăтартнă. Ентри каланă тăрăх, çав «тискер» йапалана курсан вăл (Матĕрне) çеçен хир варринђе ђăркуçленсе ларнă та, аллисене çӳлелле тăратса, кăшкăрса ларнă: «Турă ил ман ђуна. Турă, хĕрхен пире, Анна карђăк ђунне те ил!». Вăл тата малалла пăсăлнă йероплантан («вĕçевçĕ») тухни çинђен, вăл Аннан ђукĕпе унăн ђĕтреме ђарăнман ӳтне йероплантан тухса илни çинђен каласа пађĕ.

Астутарни. Ку калава акă мĕнле çырнă: ĕç мĕнле пĕтнине, илтĕнекен сасă кам сасси иккенне каласа кăтартман пирки вулакан, вуланă ђух мĕн пĕтиђђенех хавассăн, шухăшлă вулаҍ. Калава урăхла тума та пулаҍ: сасă йероплантан илтĕннине малтанах пытармасан та йураҍ. Анђах вулакан калава хавассăн вулатăр тесен, мĕн те пулсан урăх йапала тупас пулаҍ, сăмахран калăпăр: çулпа пыракан хĕрарăмсем хăрани ӳснĕçем ӳссе пынипе, вĕсем кайарахпа çав тери хăранине майлă кăтартма пулаҍ.

Халђ ĕнтĕ çав саметкăранах сăвă тума тытăнар.

## ЙЕРОПЛАН КУРӐННИ.

Тӗлӗрнӗ йал улӑм ӑшӗнђе,
Итемсем те ӑйхӑра,
Ӗмӗрхи урапа сассипе
Йал „иртнине" шухӑшлат̆.
Сасартӑк тӑвӑлсӑрах инҫетре
(Хӑлхасенђе ӳкӗрни йанӑрат̆)
Лашасӑрах тӗнђене кисретсе,
Ҫӳл пӗлӗтрен шуса анат̆...
Усал пулсан та, ђи асли,
Илйа пророк та ӑна ҫитес ҫук.
Хӗрарӑмсем килелле тараҫҫӗ.
Вӗсем мӗн кӑшкӑрнине пӗлме ҫук.
Арҫынсем—аплах мар—вӗсене ђараҫҫӗ:
„Ухмахсем—нихӑҫан та ӑса кӗрес ҫук
Ађасене анђах „мурит" тӑваҫҫӗ".
Ҫапла, хурҫӑ йероплан
Тӗлӗрсе ларакан йалсене
Вӑратат̆ ӗмӗрхи ӑйхӑран,

## ПЛАН.

1. Йал тӗттӗмре пурӑннине кӑтартнӑ.

2. Ун тӗлӗнђе йероплан курӑнни (ӑна тӗттӗм йалти ҫынна мӗнле курӑннине кӑтартса ҫырнӑ).

3. Хӗрарӑмсем хӑрани (вӗсем хӑранине ҫырнӑ вӑхӑтра тата вӗсен тӗрлӗ йапалана ӗненнине те кӑшт кӑтартса панӑ).

4. Хӗрарӑмсем, мӗн иккенне пӗлмесӗрех ыттисене хӑратнипе арҫынсем вӗсене вӑрҫаҫҫӗ. (Ку арҫынсем нимӗн курман хӗрарӑмсенђен маларах тӑнине, вӗсем «тӗнђе курнине» кӑтартат̆).

5. Йулашки йӗркесенђе: йероплан курӑнни йала пит нумай усӑ кӳме пултарат̆, мӗншӗн тесен вӑл хресђенӗн тӗттӗмлӗхне пӗтерме пулӑшат̆.

### Ку кӗнеке хыҫҫӑн мӗн вуламалла?

Ку кӗнекене ҫыракан, хаљ кӑна тытӑнакан йалкорсене илемлӗ сӑмахри паллӑрах вырӑнсемпе паллаштарас тесе ҫырнӑ. Литтераттурӑ ҫинђен тата ытларах вӗренес текенсен, епӗр кӑтартса панӑ канашсене вӗренсе ҫитсен, ђӑвашла хаҫат-шурналсем, кӗнекесем ытларах вулама тӑрӑшмалла.

1520бр

Чебоксары, типография школы ФЗУ.

Чувашлит № 2038. Заказ № 1149. Тираж 2000 экз.

Цена 75 коп.

Основы литературной грамоты.

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары — 1930